Пирĕн пуç çинђе тăракан инкек.

(Бѣда висящая надъ русскою землею).

Хакĕ 1 тенкĕ.

СИМБИРСК,
тип. Н-в Балакирщикова
1 9 1 8.

ОГЛАВЛЕНІЕ.

Стр.

1. Халӗ ҫынсен мӗн ҫинҁен мухӑшламалла 1

2. Халӗ ҫынсем мӗн ҫинҁен пит калаҫаҫҫӗ 14

3. Соціализм ҫинҁен 17

4. Соціалистсем мӗне вӗрентеҫҫӗ, мӗн шухӑшлаҫҫӗ вӗсем 22

5. Нимӗҁсен соціалистсем, нимӗҁсен вӑрҫисем 24

6. Нимӗҁсем мӗн хушнине тумалла мар пирӗн, нимӗтсем хӑйсемшӗн мӗн тӑваҫҫӗ, ҫавна тумалла 30

7. Ытти соцілистсем мӗне вӗнентеҫҫӗ, мӗн шухӑшлаҫҫӗ вӗсем 33

8. Ҫӗр ӗҫӗ 38

9. Ҫӗртен етем усӑ курни 52

10. Ҫӗре пӗр тӳлемесӗр валеҫсе пани 58

I. Халĕ çынсен мĕн çинҫен шухăшламалла.

Вăрçă пуçланнăранпа нимĕҫсем пирĕн çĕре пайтах туртса илҫĕç, халĕ тата вăрçă сийенне саплама тесе пиртен укçа (контрибуція) илесшĕн. Епир нимĕҫсенҫен нумай сийен куртăмăр хамăр та, тата вĕсене укçа тӳлесе хамăра йăлтах çука хăвармалла-и?! Пире сийен тунăшăн пирĕн хамăрăн нимĕҫсенҫен укçа шырамаллаҫҫĕ.

Пирĕн хушшăмăрти çынсем нумайĕшĕ ак çапла калаççĕ: нимĕҫрен пире укçа кирлĕ мар, нимĕҫсем пирĕн çине вăрçăпа килсе пире сийен тунă пулсан та, сийенне хамăр ҫăтăпăр, хамăрах саплăпăр, теççĕ. Нимĕҫсем калаççĕ: вырăс халăхĕ; есир пире укçа та тӳлĕр, тата хăвăр патшалăхран туртса илнĕ çĕре те пирех парăр, теççĕ.

Самана йывăр пирки çар çыннисем (салтаксем) пăлхана пуçларĕç, тĕрлĕ çын тĕрлĕ май калаçнипе вĕсем антраса кайаççĕ. Пĕр йенҫен вĕсене калаççĕ: вăрçма пăрахас, йут халăхсене çĕнтерни, пăхăнтарни пире кирлĕ мар, теççĕ. Çавăнтах тата тепĕрисем салтаксенҫен çапла ыйтаççĕ: йурĕ еппин, вăрçа ҫасрах ҫарасҫĕ, анҫах йепле ҫармалла-ши? Ҫикĕри мĕн пур çар ушкăнне кун-

талла ђакарсан, нимĕђсем пиртен туртса илнĕ мĕн-пур çĕре нимĕђсене парса хăварас-и? Нимĕђсем пиртен мĕн илес тенине малашне те пурне те памалла-и вĕсене? теççĕ. Çаксем çинђен халăхăн шухăшласа пăхас пулаť, ђипер шухăшласа илсе, мĕн тума кирлине пĕлсе тăвас пулаť. Вăрçă патĕнђе халĕ пирĕн хĕç-пăшал тытса мĕн пурĕ 14 милліон çын тăраť. Çав тери нумай çынна тăрантарса усрама, вĕсене тумлантарса тăма нумай хал кирлĕ, нумай халăх укçи кирлĕ: куллен тенĕ пек вăрçă пирки 50 милліона йахăн укçа пĕтет. Çар çыннисем хăшĕсем нимĕђсемпе вăрçасшăн мар, нимĕђсемпе хăçан килĕшĕпĕр-ши, тесе анђах кĕтсе тăраççĕ. Çав тери нумай çарра вăрçă патĕнђе усрама халăхăн укçи, халĕ нумай вăхăта çитĕ-ши? Нимĕђ майлă çынсем пирĕн халăха пăтратасшăн тарăхса кăшкăраççĕ: çак вăрçă никама та кирлĕ мар, французсемпе англичансене анђах кирлĕ: вăрçă вăхăтĕнђе вĕсем тата ытларах пуйса кайаççĕ, пирĕн мĕн пур вăрçни те çавăншăн анђах, тесе пăтратса çӳреççĕ. Çапла калакан çынсем нимĕн пĕлмесĕр калаççĕ, йе пĕлсен те, çав сăмаха йури сӳйеçтерсе калаççĕ. Нимĕђсем вĕсем халĕ кăна мар, ĕлĕкренпех пирĕн тăшмансем, тахăçантанпах вĕсем хĕвел-тухĕç йеннелле килсе славянсен çĕрне турта турта илсе пĕтернĕ, çыннисене пурне те тенĕ пек вĕлерсе пĕтернĕ. Эльба йатлă шыв тăрăх пурăнакан славянсем нимĕђсем çĕнтерсе илни-

пе пётсе ларнӑ, Берлин хули таврашӗнђе те авал славянсем пурӑннӑ, Бранденбург хули вырӑнӗнђе ӗлӗк славянсен Бранiйбор йатлӑ хула пулнӑ. Чехсем, Славенцсем, поляксем нумайӗшӗ нимӗђсем хӗсӗрленипе нимӗђе тухса кайнӑ, хӑшӗ тата йӑлтах пётсе ларнӑ.

Вырӑссемпе вӑрҫас тесе, нимӗђсем 40 ҫул малтан хатӗрленме тытӑннӑ, хатӗрленсе ҫитсен, нимӗђ халӑхӗ пирӗн ҫине, хатӗр марскерсем ҫине, вӑрҫӑпа килђӗ. Ҫапах та нимӗђсем шухӑшланӑ пекех пулмарӗ. Нимӗђсем шухӑшланӑ: вырӑссем майлӑ французсем анђах пулӗҫ тесе; вӑрҫӑ пуҫланса кайсанах, англичансем те пирӗн майлах пулђӗҫ, пыра-киле Италiя ҫыннисем, Японiя ҫыннисем те пирӗн майлӑ пулђӗҫ. халӗрех тата Америка та пирӗн ушкӑна хутшӑнђӗ. Вӗсем пур те пирӗн майлӑ пулса, пирӗн шухӑшра тӑраҫҫӗ, йепле те пулсан нимӗђсен йывӑр аллине кӗрсе ӳкес марђђӗ, тесе шухӑшлаҫҫӗ. Самана лӑпкӑ тӑнӑ вӑхӑтра Англiяпа Америкара йалан хатӗр тӑракан ҫарӑ ҫук; вӑрҫӑ тапранса кайсан, вӗсем ирӗккӗн вӑрҫа кайас тенӗ ҫынсене ђӗнсе ҫар пуҫтарђӗҫ, ҫарӗ те вӗсен ун ђухне нумай марђђӗ, вӑрҫӑра ҫӳрекен карапсем валли те матроссене ирӗклӗ ҫынсенђенех пухрӗҫ.

Германiяпа Францiя хушшинђе тинӗс хӗррипе пӗр Бельгiя йатлӑ пӗђӗк патшалӑх пур. Вӑрҫӑ мӗн тапранса кайсан, ҫав тери пӗђӗкҫӗ Бельгiя патшалӑхне тивес мар тесе,

Россіяпа Франція, Германіяпа Англія ӗлӗкех пӗрле килӗшсе сӑмах хунӑ, ҫавӑнпа Бельгіяра пысӑк ҫарӑ мӗн нихӑҫан та пулман, тӗреклӗ хуласем (крѣпость) те пулман. Вӑрҫӑ тапранса кайсан, нимӗҫсем Бельгія халӑхне систермесӗрех, вӗсен ҫӗрӗ ҫине кӗрсе кайнӑ, Бельгія патшалӑхне ҫӗмӗрсе тӑкса, ӑна туртса илесшӗн пулнӑ. Англичансем нимӗҫсене—Бельгіяна тивмелле мар—тесе ҫырнӑ хута аса илтерсен, нимӗҫсем вӗсене хирӗҫ: хут ҫине ҫырса хунӑ сӑмах нимӗне те тӑмасӑ вӑл, тенӗ. Англичансен шанса йанӑ ҫынни (посланник) нимӗҫсене хирӗҫ каланӑ: хут хӑй нимӗн пек мар туйӑнаӑ пулсан та, вӑл хут ҫинҫе Англія йаҫӗ пур, тенӗ. Унтан вара Англія Бельгіяна пулӑшма Германіяна хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласа йанӑ. Ун ҫухне англичансен ҫарӑ сахал пулнӑ, Бельгіяна пулӑшма вӗсем мӗн пурӗ те 6 пин матрос анҫах йанӑ. Бельгія халӑхне пӗтерме парас мар тесе, нимӗҫсене хирӗҫ французсем темӗн ҫухлӗ вилсе пӗтнӗ, хула урамӗсенҫе иртсе ҫӳреме ҫук ҫын вилли пулнӑ, вырӑнӗ-вырӑнӗпе вилнӗ ҫын купи урамсенҫе пӳрт тӑрринҫен те ҫӳлӗ пулнӑ. Нимӗҫсем Бельгія халӑхне ҫӗнтерсе французсен ҫӗрӗ ҫине кӗнӗҫемӗн шалалла кӗре пуҫланӑ, вӗсем пӗтӗм Франція ҫӗрне туртса илме шухӑш тытнӑ; Париж патнеллех пырса ҫитнӗ. Французсен ҫар пуҫлӑхӗ хӑйсен ҫарӗсене: кама ӑҫта тӑратнӑ, вилиҫенех ҫав вырӑнта тӑ-

тăр, тесе каласан тин вара нимĕҫсене маЛалла, Париж хули патне пырасран ҫарнă.

Французсем хăйсен ҫунне хĕрхенмИ таранҫҫен нимĕҫсене хирĕç тăнă ҫух, пирĕн хушшăмăрта хăшĕ салтаксене пăтратса ç̆ўреме тытăнҫĕç. Пăтратса ç̆ўреме ăста çынсем пирĕн пата нимĕҫсем патĕнҫен килҫĕç, вĕсем хăйсене хăйсем: „епир пысăк ĕçе те тума пултаратпăр, пуçлăхсене хирĕç пыма та пултаратпăр“ тесе, нимĕн пĕлмен халăха пăтратса ç̆ўреççĕ: нимĕҫсем вĕсем вырăссен тăшманĕсем мар, тусĕсем пулаççĕ, халҫхи вăрçă никама та мар, Францiяпа Англiяна анҫах усăллă, вăрçа вĕсем пуçласа йанă, Германiя вăрçас тесе шухăшламан та“, теççĕ. „Вырăс салтакĕсен нимĕҫсемпе килĕшмелле, вăрçă ĕçне пăрахса, хăвăртрах пуйан çынсен çĕрне туртса илме тытăнас пулаť, вĕсен мулне хăвăра уйăрас пулаť“, тесе илĕртеççĕ. Çапла илĕртсе нимĕҫсем халăха пăтратасшăн. Халăх пăлханса кайни нимĕҫсене пит кирлĕ вăл, халăх пăтранса пĕр-пĕринпе çапăçма тытăнса кайсан, нимĕҫсене Россiяна ç̆ĕнтерме çăмăл пулаť вара. Ĕненмелле-и çав халăха пăлхатакан çынсен сăмахне? Вĕсен сăмахĕ хыççăн кайса хамăра нимĕҫсен алли айне кӳртсе ӳкерес-и?! Ан манăр, çак хăрушă вăрçа епир мар, нимĕҫсем пуçласа йаҫĕç; Бельгiя патшалăхне нихăçан та тивмелле мар—тенĕ хут çинҫе пирĕн Россiя йаҫĕ ҫăн пуçламăшĕнҫе тăраť, хамăр каласа хунă сăмаха улăштарса усал çынсем илĕртнĕ хыç-

ҫӑн каймалла-и? Вӗсен хыҫҫӑн кайса, нимӗҗсемпе килӗшсе, хамӑр халӑха пӑтратса ҫӳремелле-и? Йе ҫавӑн пек кирлӗ мар шухӑша пӑрахса, малалла та хамӑрпа пӗр-канашлӑ халӑхсемпе пӗрле пулса, хамӑр ирӗке сыхлар-и, хамӑр йата, намӑса ан йарар-и? Питех те шухӑшлас пулат ҫавӑн ҫинҗен, пурин те шухӑшлас пулат.

Самана пӑтранса кайнипе завод-фабриксем нумайӗшӗ ӗҫлеме җарӑнҗӗҫ, халӑха кирлӗ йапаласем мӗн кирли нимӗн те ҫук; пур пулсан та, питӗ хаклӑ, ҫитменнине тата хакӗ куллен кун ӳссе пырат. Сахӑр ҫук, тулӑ ҫӑнӑхӗ те ҫук, ыраш ҫӑнӑхне те карточкапа анҗах пара пуҫларӗҫ. Выҗӑх-җӗрлӗхсене пӗтерҗӗҫ, пусма-тӑла тавраш ҫук, атӑ таврашӗ те ҫук, тимӗр таварӗсем пӗтрӗҫ, лаша таканлатас пулсан та, тимӗр тупма ҫук. Хамӑра кирлӗ йапаласене сутӑн илес тесен, укҫа парсан та тупма ҫук, хулара та ҫук, йалти пасарсенҗе те ҫук. Пыра-киле выҫӑ лармалла пулӗ, тумтирсӗр, нимӗнсӗр тӑрса йулӑпӑр.

Мӗнтен килет вӑл? Мӗнтен килнине пурне те каласа та пӗтерес ҫук. Вӑрҫӑ тапрансан, ӗҫлекен ҫынсене вӑрҫа илсе кайнипе нумай заводсем, фабриксем пушанса йулҗӗҫ, унта ӗҫлекен йапаласене (таварсене) сахал кӑлара пуҫларӗҫ, хӑш заводсем тата пире кирлӗ йапаласене ӗҫлеме пӑрахса, вӑрҫӑ патӗнҗе кирлӗ йапаласене тума тытӑнҗӗҫ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа җукун ҫул тӑ-

рăх çӳреме, таварсене илсе килме пит хĕсĕк пула пуçларĕ. Завод-фабриксенђе ĕç ан ђа-рăнтăр тесен, кирлĕ йапаласене (вутă, çĕр-мамăкĕ, ђукун, тимĕр, сӳс-кантăр, çĕр-кăм-рăкĕ) мĕн кирлĕ таран йалан илсе пырса тăмалла; халĕ вагонсем çуккипе, çынсем са-халлипе çав йапаласене çителĕклĕ илсе килсе параймаççĕ, çавăнпа ђас-ђасах ĕçлес ĕç ђарăнса тăрать, халăха мĕн кирлĕ йапа-ласене çителĕклĕ туса кăлараймаççĕ, хăш ђухне çавăн пирки заводсем, фабриксем ĕçлеме те пăрахаççĕ, унта ĕçлесе пурăнакан çынсем ĕçсĕр йулаççĕ вара. Халĕ тата ĕçле-кен çынсем кун-каçиђђен ĕçлес вăхăта кĕс-кетрĕç, 8 сехет анђах ĕçлемелле турĕç; са-хал вăхăт ĕçленипе халăха кирлĕ таран йапаласем хатĕрлесе çитерейменççĕ. Ĕçлес куна кĕскетессине пăртак тăмаллађђĕ, çĕнĕ-рен лайăх машинасем туйансан, вăл ма-шинасемпе сахал вăхăтра та нумай йапала-сем тума май пулсан тин кунне 8 сехет ĕçлемелле тумаллађђĕ.

Патшалăхра кирлĕ ĕçсене тума укçа пай-тах кайать. Вăрçă пуçланиђђен куллен 8 мил-ліон таранђђен пĕтеђђĕ, халĕ 60 милліона йахăн пĕтет. Килекен укçа ĕлĕкхинђен те сахал, кайаканни пит нумай. Ĕлĕк ерех сутса пит нумай укçа пуçтарађђĕç, куллен 3 мил-ліонлăх тенĕ пек ерех кайађђĕ. Патшалăхра кирлĕ ĕçсене тума халĕ укçа ăçтан тупмал-лă? Халĕ икĕ майпа укçа тупма пулать пи-рĕн патшалăхра.

1) Çынсенђен кивçен илсен. Пирĕн вăхăтлăха пулнă аслă пуçлăхсем (временное правительство) пĕтĕм халăхран укçа кивçен илесшĕн, çав шухăшпа „заем свободы" тейекен билетсем кăларнă, пурне те çав билетсене илме хушат̆; алăра укçа пур çынсен пурин те çав билетсене илес пулат̆, çав билетсене илнипе епир патшалăха укçа кивçен паратпăр, хамăра та сийен тумастпăр, усă анђах тăватпăр; çав билетсем пире услам параççĕ, 100 тенкĕ пуçне çуллен 5 тенкĕ усă кӳреççĕ. Патшалăха кивçен укçа панипе, çук çынна вăхăтлăха кивçен укçа парса çĕкленĕ пек, епир патшалăха çак йывăр саманара пулăшатпăр.

2) Укçа туйанас тесен тата кивçен илнинђен пуçне, çĕнĕрен хут укçасем çаптарса укçана нумайлантарма пулат̆. Халĕ укçа нумай кирлипе куллен тенĕ пек 30 милліон тенкĕлĕх çĕнĕрен хут укçа çаптараççĕ. Хут укça нумай çаптарнинђен сийен çук пулĕ, тесе шухăшлаççĕ нимĕн пĕлмен çынсем. Сийенни пурах, питех те сийен пулат̆ укçа нумай çаптарнинђен. Хут укçа вăл патшалăх шантарса панă хут пулат̆; хут укçа вырăнне Россія патшалăхĕ хут укçа тытса тăракан çынна кайран ылттăнпа тӳлемелле, ылттăнпа тӳлемесен, патшалăхри пурлăхпа: çĕрпе, вăрманпа, çĕр айĕнђе пур—хаклă йапаласемпе (кĕмĕл, пăхăр, тимĕр) тӳлемелле. Халĕ хут укçа халăх хушшинђе куллен кун нумайланса пырат̆, хут укçан хакĕ ça-

вăнпа шав ђакса пырать. Вăрçă пуçланиђђен Франціяра пирĕн пĕр тенкĕ хут укçа вырăнне $2^2/_3$ франк парађђĕç, халĕ $1^1/_3$ франк анђах параççĕ. Халĕ пирĕн 10 тенкĕлĕх хут укçана французсен укçипе танлаштарсан, вăл 5 тенке анђах тăрать, хамăр хушшăмăрти таварпа танлаштарсан 10 тенкĕлĕх хут укçа 5 тенкĕ те тăмасть.

Хут укçа хакĕ йӳнелнине акă çакăнтан ăнласа илĕр. Ĕлĕк пĕр тенкĕ хут укçа çине кĕмĕл укçа пĕр тенкех парађђĕç, пыра киле кĕмĕл тенкĕ-тенкĕ те 20 пуса çитрĕ, халĕ ĕнтĕ кĕмĕл тенке хут укçапа икĕ тенке те тупас çук. Епир ĕçекен ђей курăкне Китайран кӳреççĕ, Китайра ђейе кĕмĕл укçалла, йе ылттăн укçалла анђах сутаççĕ, çавăнпа халĕ ђей хакĕ те ӳсрĕ; ĕлĕк çĕр тенке илекен ђейе халĕ ĕнтĕ 200 тенке те памаççĕ. Ĕлĕк ситец тейекен пусма аршăнĕ 12 пусђĕ, тимĕре пăтне 2 тенке парађђĕç. Çумра пĕр 5 тенкĕ укçа пулсан, ĕлĕк унпа 40 аршăн пусма, йе 2 пăт çурă тимĕр илме пулађђĕ. Халĕ пусма таврашне аршăнне 85 пус парсан та тупма çук, пĕр пăт тимĕр илес пулсан, 10—12 тенкĕ парас пулать; 5 тенкĕ укçапа халĕ пĕр 6—7 аршăн пусма, йе 15 кĕрепенке тимĕр илейĕн-и. Халăх хушшинђе хут укçа йалан йышлăланса пырать, хакĕ куллен ђакса пырать. Пĕр-пĕр çын пĕр мишук ыраш сутма илсе кайать: çак ыраша сутам та, укçипе хам валли сăкманлăх 5 аршăн тăла илем, тесе шухăшлать. Пайанах

илнĕ пулсан, унăн тыра сутса туйаннă укçи тăла илме çитеђђĕ, анђах вăл пайанхи кун илме ĕлкĕреймерĕ, çавăнпа тăла илес тесе пасара тепĕр ернерен каллах кайаť вăл. Тырă сутса туйаннă укçа халĕ 5 аршăн илме çитмест, 4½ аршăн илме анђах çитет. „Тăла хаклăланнă иккен“, тесе калĕç çынсем. Çук, тăла хаклăланнипе анђах мар, çав ерне хушшинђе хут укçа хакĕ ђакнă. Тырă сутса илнĕ укçа çын кĕсйинђе пĕр ерне выртнă вăхăтра, хут укçа çĕнĕрен тата 200 милліон тенкĕ кăларнă, çав çĕнĕрен кăларнă укçасемпе çынсем пасара тавар илме пынă; алăра укçа нумаййипе таварĕ пасарта нумайланман, çав-çавах йулнă, йе çынсен илнипе ђакнă, укçи нумайланнă, çавăнпа укçа хакĕ йӳнелнĕ.

Пĕр-пĕр çыннăн 100 тенкĕ укçа пултăр. Çав 100 тенкĕ укçапа вăл ĕлĕк 10 мăшăр атă илме пултарађђĕ; çур çул иртсен çав 100 тенкĕпе 7 мăшăр ată анђах илме пулаť. Çулталăк иртсен 100 тенкĕпе 3 мăшăр ată анђах илме пулаť, халĕ ĕнтĕ 2 мăшăр атта 100 тенкĕ ыйтаççĕ. Хут укçа йӳнелнипе халĕ çынсем хăйсен мĕн пур йапалисене сутмасăр, кăлармасăр тытса тăраççĕ, йапаласене никам та укçалла сутасшăн мар, ытти таварпа анђах улăштарасшăн. Хут укçа хакĕ йӳнелнипе пыра-киле хамăра кирлĕ йапалана епир темĕн ђухлĕ укçа парсан та тупаймăпăр. Ĕлĕк Франціяра çакăн пек йывăр

саманара пӗр кӗрепенке супӑӊ пин те 500 тенке ҫитнӗ; пирӗн ҫавна курмалла ан пултӑр.

Епӗ хӗлле мӗн пур пек тыррӑма хыснa хакӗпе сутса йатӑм, тырӑ вырӑнне манӑн хут укҫа пулҕтӗ. Ҫав укҫан хакӗ ӗнтӗ ӗлӗкхинҕен, тырӑ сутнӑ вӑхӑтринҕен, икӗ хут ҕакрӗ.

Шалу илсе тӑракан ҫынсем пур те: ӗлӗкхи шалупа пурӑнаймастпӑр, шалу ӳстерӗр пире, теҫҫӗ. Ыйтнине кура вӗсене шалу ӳстереҫҫӗ, анаҕх шалу ӳстерсен те, вӗсене хут укҫах параҫҫӗ, ҫавӑнпа ӳстернӗ шалу вӗсене татах ҫитеймест, татах ӳстерес пулаť, вӗсене шалу ӳстерсе паме татах ҫӗнӗрен хут укҫа ҫаптарас пулаť. Йалан кирлӗ ҕухне ҫӗнӗрен хут укҫа кӑларса пынипе тӑра —киле хут укҫан хакӗ пӗтӗмпех пӗтӗ, хут укҫа ниӑҫта та кайми пулӗ, нимӗне йурӑхсӑра тухса кайӗ. Ҫӗнӗрен хут укҫа кӑларни патшалӑха та, халӑха та сийен тӑваť. Ҫавӑнпа та пуҫлӑхсем халӑха калаҫҫӗ: патшалӑха кивҫен укҫа парӑр, ирӗклӗх йаҕӗпе кивҫен илес тесе кӑларнӑ билетсене сутӑн илӗр, ҫӗнӗрен хут укҫа кӑларттармалла ан тӑвӑр, хут укҫа нумай кӑларни никама та усӑллӑ мар, сийен анҕах тӑваť.

Халӑх хушшинҕе ҫӳрекен хут укҫасемшӗн тӳлес парӑм, тата кивҫен илнӗ ытти парӑмсене тӳлес тесен, пирӗн Россіян парӑмӗ мӗн пурӗ 70 милліарда ҫитет. Ҫавӑ питӗ пысӑк укҫа, ҫав парӑма пур ҫынсем ҫине те валеҫсе йарсан, тин ҫуралнӑ аҕа ҫине те

400 тенкĕ ӳкет, çав парăмăн процентне кăна кашнă çыннăн уйăхне 2 тенкĕ тӳлесе тăрас пулаť. Пирĕн хут укçасем, парăм тӳлемелли хутсем йут патшалăхри çынсен аллинђе те пур, нимĕђсен аллинђе те пур, çавăнпа епир вĕсене те парăмлă çынсем пулса тăратпăр.

Çакă йывăр саманара пирĕн патшалăха пит кансĕр, хăш хăш çынсем çавна пĕлмесĕр, пĕлсен те пĕлмĕш пек пулса, патшалăхшăн тăрăшмаççĕ, халăхшăн тăрăшмаççĕ; хăйсемшĕн анђах тăрăшаççĕ, хăйсене анђах аван пултăр, теççĕ. Тĕрлĕ çынсем харпăр хăйшĕн анђах тăрăшнипе халăх ĕçĕ ђарăнса тăраť, самана пушшех пăтранса кайаť. Халăх хушшинђе тĕрлĕ çынсем пур, Хăшĕ ак çапла калаçаççĕ: мĕн пур усал пуйан çынсенђен килет, вĕсен çĕрне, вĕсен укçине, вĕсен мулне туртса илес пулаť, вара пурне те аван пулĕ, теççĕ. Çапла калакан çынсен хыççăн кайсан, мĕн пулĕ-ши?! Халĕ пирĕн патшалăх пит пысăк патшалăх: унăн тăрăшши хĕвел-анăç йенђи Балтiйски тинĕс патĕнђен те, хĕвел-тухĕç йеннелле Аслă океан патне çитиђђенех пыраť, сарлакăшĕ Çур-çĕр йенђи пăрлă океанран пуçласа кăнтăр йеннелле Хура тинĕс патне çитиђђен пыраť. Вăл патшалăхра темиçе тĕрлĕ халăх пурăнаť, çав халăхсене пурне те салатса пĕтерĕç и вара? Ку таранђђен пирĕн халăха ырă сунман çынсем йури тенĕ пек тĕттĕмре усрарĕç, вĕсене сахал вĕрентрĕç, çавăн-

па пирӗн хура халӑх хушшинҗе çырӑва пӗлмен çынсем пит нумай. Халӑх тӗттӗмре тӑнипе халӑх хушшинҗе тӗрлӗ çынçем пӑтратса çӳреççӗ, хӑйсен хайар сӑмахӗсемпе ӑслӑ çынсене те пӑсса пӗтереççӗ, куçа тусанпа сапса хупланӑ пек, ырӑ çынсен ӑсӗсене те улӑштарса йараççӗ, илтнӗ сӑмах хыççӑн кайнипе çын мӗн тусан мӗн пуласси не җухлайми пулаҭ. Çынсене пурне те ирӗк панипе халӗ нумайӗшӗ пӗрлешсе тӗрлӗ ушкӑна кӗреççӗ, хӑйсем шухӑшланӑ шухӑшне тӑвас тесе, йулташӗсемпе пӗрлешсе, тӗрлӗ ушкӑнсем кӑлараççӗ. Çавӑн пек ушкӑнсем халӗ пит нумай. Çав ушкӑнри çынсем пур те хӑйсене анҗах мухтаççӗ, ытти çынсене, ытти ушкӑнра тӑракансене хурлаççӗ; хӑйсене мухтаса, пурне те, хӑйсен майлӑ тӑвас тесе, халӑх хушшинҗе çӳресе çынсемпе калаçса, çынсене пӑтратса çӳреççӗ. Хӑшин шухӑшӗ усӑллӑ-ши, камӑн сӑмахӗ тӗрӗс-ши? Йалан ӗç çинҗе тӑракан çынна çавна пӗлме пит йывӑр пулсан та пӗлме тӑрӑшас пулаҭ, пӗр нимӗн шухӑшламасӑр, хӗтӗртсе калакан çын хыççӑн кайма йурамасҭ; вӗсен хыççӑн кайнипе епир ырӑлӑх тупас çук, хамӑра хамӑр тӗп—тӑватпӑр анҗах. Темӗн тӗрлӗ ӗç нумай çыннӑн та çак йывӑр саманара пӗр нимӗн шухӑшламасӑр пурӑнма йурамасҭ, кам халӑха усӑ тӑваҭ, хӑш ушкӑнри çынсен сӑмахӗ пире усӑллӑ, çавна пӗлме тӑрашас пулаҭ.

II. Халӗ ҫынсем мӗн ҫинґен пит калаҫаҫҫӗ.

Ҫынсем пухӑва мӗне пуҫтарӑнсан, салтакран тавӑрӑннӑ ҫынсем таҫтан илтсе килнӗ сӑмахсем каласа халӑха пӑтратаҫҫӗ: соціализм, соціализировать, соціал-демократ, соціал-революціонер, большевик, меньшевик, тенӗ сӑмахсем пӗр-май тухаҭ вӗсен ҫӑварӗнґен. Ҫав сӑмахсем мӗне пӗлтернине хӑйсем те лайӑх пӗлмеҫҫӗ, ҫапах та вӑл сӑмахсем вӗсен асӗнґен каймаҫҫӗ. Ҫав сӑмахсене калакан ҫынсен шухӑшӗ мӗнле-ши, мӗне пӗлтереҫҫӗ—ши ҫав сӑмахсем? Ҫавна ӑнласа илме тӑрӑшар-ха.

Соціальный тенӗ сӑмах француз ґӗлхипе каланӑ сӑмах, вӑл сӑмах латин ґӗлхипе *пӗрлешнӗ* тесе каланӑ сӑмахран тухаҭ, ҫавӑнпа соціальный тенӗ сӑмаха ґӑвашла каласан, „пӗрлешнисен" тени пулаҭ, темиҫе ҫынна тивӗҫли тени пулаҭ. Пӳрт-ҫурт таврашіӗнґи пахґа ҫурт хуҫин пахґи пулаҭ, кӗтӳ ҫӳрекен вырӑн, йе пӗр-пӗр ҫаран, халӑхӑн пулаҭ; пӗр ҫынна анґах мар, нумай ҫынсене тивӗҫлӗ йапала пулаҭ, ӑна вара *соціальный* теме пулаҭ.

Франціяра пӗр ҫӗр ҫул ӗлӗк ак ҫапла калаҫакан ҫынсем пулнӑ: ҫынсем нуша ан курґґӑр, ґухӑн ҫынсем ан пулґґӑр тесен, ҫӗре, завод-фабриксене пӗр хуҫанӑн мар, пурин те кӑна тумалла (соціализировать);

çĕр, фабрик-заводсем никамăн та мар, пĕтĕм халăхăн пултăр, вара çынсем хушшинђи нуша, çынсем тӳссе пурăнакан ђухăн пурăнăç пĕтĕ, пурне те вара пĕр пек аван пулĕ, пур те пĕр пек çителĕклă, пĕр пек ырă пурăнĕç, тенĕ. Çапла каласа вĕрентекен çынсен сăмахне *соціализм* тенĕ, çав соціализм вĕрентнипе тăвас тесен, нийепле йапала та никамăн та харпăр хăйĕн пулмалла мар, пĕтĕм халăхăн, пĕтĕм патшалăхăн пулмалла. Çав сăмаха ĕненнипе нумайĕшĕ шухăшлаççĕ: етеме кирлĕ йапала никамăн та харпăр хăйĕн ан пултăр, пĕтĕм халăхăн пултăр, çапла тусанах, çынсен пурăнăçĕ аванланса кайĕђђĕ, теççĕ. Ђăнах та хăш-хăш йапалана харпăр—хай аллинђен илсе халăх аллине пама йураť. Хуласенђе пĕтĕм хулари çынсен вăйĕпе пĕр-пĕр çĕртен шыв илсе пырса, çав шыва кама кирлĕ çынна парса тăраççĕ; вырăнĕ вырăнĕпе пĕтĕм уйасри çынсем аслă çул тăрăх ђул сарса тухса çула аванлатаççĕ, вырăнĕ вырăнĕпе ђукун çул тăваççĕ, тата хăш хуласенђе çук çынсене пурăнма, ĕçлекен çынсене пурăнма çуртсем тăваççĕ, заводсем, фабриксем тăваççĕ. Йалсенђе халăхпа ђиркӳ лартаççĕ, шкулсем тăваççĕ, вĕсен уссине вара пĕр çын анђах мар, пĕтĕм халăх курса тăраť, çав йапаласем пур те ырă ĕçсем, вĕсенђен пур те усă курса пурăнаççĕ. Çав халăха усăллă, патшалăхри çынсене пурне те кирлĕ ĕçсене тума çăмăл мар, йывăр; çав ĕçсене пурне те тума

хура халăх хăй тĕллĕн пултараймасť, вĕреннĕ, ăста çынсем анђах тума пултараççĕ ăна. Пĕр-пĕр пысăк фабрикра, йе заводри темиçе пин çын ĕçлесе пурăнаť пулсан, çав çынсем тĕрлĕ нађар çуртсенђе пурăниђђен, пĕрлешсе хăйсене пурăнма лайăх çуртсем туса хурсан, питех те аван пулĕђђĕ, ăçта килђĕ унта, мĕн тĕл пулнă ăна çикелесе çӳриђђен, пур те пĕрле çисе пурăнмалли çурт тусан, пурин валли те пĕр пек ĕçме-çиме хатĕрлесен, аван пулĕђђĕ. Çапла туни ђăнах та аван терипе аван. Анђах çав ĕçсене тума пĕлекен çынсем кирлĕ, халăхăн хăйĕн те çав ĕçсен уссине курма хатĕр пулас пулаť. Ĕçĕ мĕн ђухлĕ пысăк, çавăн ђухлĕ нумай пĕлекен çын кирлĕ, çавăн ђухлĕ çынсен малашне хăйсем пĕрлешсе пурăнма хатĕр пулас пулаť. Соціалистсем—çынсен харпăр хăйĕн йапали, харпăр хăйĕн мул, нимĕн те ан пултăр, харпăр хăй йапалине пĕтермелле,теççĕ. Пур çынсем те харпăр-хăй çĕрне, харпăр-хăй çуртне—йĕрне халăха пађђăр, теççĕ вĕсем. Харпăр—хăй илнĕ çĕре, килĕрен тытса çисе тăракан çĕре халăха пама çынсем пур те канаша килĕç-ши, çапла тума вĕсем хатĕр-ши? Ун çинђен калаçма тапратсан та, килĕшӳ пулас çук. „Камăн мĕн пур, çавна пур те халăха парăр, кама мĕн кирлине вара пур те халăхран илсе тăрăр“- тесе каласан, çав сăмах пур çынсене те кăмăллă пулĕ-ши? Çапла тăвас тийĕç-ши çын-

сем? Апла тума мар, вăл сăмаха итлесе тăма та пирĕн çынсенђен нумайĕшĕ хавас пулђмĕç.

Хамăра мĕн кирлĕ ĕçе, мĕн усăллине тĕпђесе пĕлсе, ытти çынсемпе пĕр сăмахлă пулса тăвас пулать. Халăха пăтратса çӳрекен çынсем илĕртнĕ хыççăн кайнипе халĕ хура халăх çыннисем, пур те тенĕ пек, кăшкăраççĕ: илес те, уйăрас! теççĕ. Мĕн пур шухăшĕ вĕсен çавă анђах. Вăл шухăша ђас та тума пулать. Пĕр кун та пулин савăнса йулам, тесси анђах. Ыран пулсанах, ĕнер хĕпĕртесе туртса илекен çын патне ыттисем пырĕç те, вĕсем те çапла калĕç: пĕр кун анђах пулсан та, манăн, тийĕç те, ĕнер туртса илнĕ йапаласене илме тытăнĕç, аттеаннерен йулнă йапалана та, ху ĕçлесе туйаннă йапаласене те илме вăтанмĕç. Соціалистсем вĕрентнĕ пек ĕçе тĕрĕссипе тăвăр, пур мул та, мĕн ĕçлени пур те пĕтĕм çынсен, пĕтĕм халăхăн пултăр. Çав ĕç питĕ пысăк ĕç, соціалистсем çав ĕçе тума шухăшлаççĕ. Пĕр кун пулсан та манăн, тесе калакан çынсем çав ĕçе май пымаççĕ, хирĕç анђах пыраççĕ.

III. Соціализм çинђен.

Соціализм вăл Франціяра çĕр çул ĕлĕк пуçланса кайнă. Ђăң малтан соціализм çинђен вĕрентекенсем—соціалистсем—çавăнта пурăннă. Вĕсем çынсене ак çапла каласа вĕрентнĕ: çынсем пурăнăç тĕлĕшĕнђен акă

мĕншĕн пĕр пек мар: çынсем ĕçленĕ ĕçĕн уссине ĕçлекен çынсене хăйсене пĕр пек уйăрса паманран, тенĕ. Çĕр пур çынсем, çурт тытса тăракан çынсем, машшина тавраш туйаннă çынсем ĕçĕн уссинђен пысăк пайне хăйсене илеççĕ, кĕрĕшсе ĕçлекен çынсене пĕђĕк пайне анђах параççĕ. Ĕçлекен çынсем ĕçшĕн илекен укçа вĕсене аран-аран тăранса пурăнма анђах çитет, тенĕ. Франціяра пурăнакан соціалистсем шухăшланă: çынсене пурăнăç тĕлĕшĕнђен пĕр пек тума йывăр мар, вĕсен пурăнăçне аванлантарма çăмăл, çынсен харпăр-хăй тĕллĕн мул тытас йĕркене анђах пĕтермелле, тенĕ. Мĕн майпа çапла тума пулаť-ши? тесе шухăшланă вара. Анђах вĕсен туса пĕтерниех нимĕн те пулман, шухăшлани анђах пулнă. Карл Маркс йатлă нумай вĕреннĕ нимĕђ çынни çавăн çинђен тĕпĕ-йĕрĕпе шухăшласа çав сăмаха тата хытăрах çийеле кăларма тăрăшнă. Карл Маркс соціализм çинђен вĕренте пуçлани 70 çула йахăн. Çав сăмах пĕтĕм тĕнђене сарăлни 50 çула йахăн ĕнтĕ. Соціализм вĕрентнĕ пек хăшне пурăнăçра та тăва пуçланă, хăшне тата малашне хăçан тăвăпăр-ши, тесе шухăшлаççĕ. Соціализм çинђен калакан кĕнекесем туха пуçланă, çав кĕнекесем халĕ тĕрлĕ ђĕлхепе пур.

Соціализм тенĕ сăмах пирĕншĕн çĕнĕ сăмах вăл, хăш çынсем халиђен вăл сăмаха илтмен те пулĕ. Çав соціализм çинђен халăх хушшинђе калаçнă ђухне, калаçакан

çыннисем çаван çинђен никам илтмен, никам пĕлмен пек тавлаш̆са калаçаççĕ, вĕсен сăмахне итлесе тăрсан, итлекеннине çапла пек туйăнать: соціализм çинђен французсем те, англичансем те, Америкари çынсем те нимĕн те пĕлмеççĕ, çав халăхпа калаçакан çын хăй анђах ун çинђен тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлнĕ пек туйăнать.

Соціализм çинђен калаçакан çынсене ăнланас тесен, соціализм çинђен çырнă кĕнекесене ăнласа вулас тесен, пирĕн малтан пĕлес пулать: çынсем — пурăнăçра хăйсене мĕн кирлине йепле туйанаççĕ-ши?

1. Етеме кирлĕ йапала пур те çын тăрăшнипе пулать, çын пĕр нимĕн тăрăшмасăр хĕвел-уйăх çуттинђен усă курать те, тата сывлăшпа сывласа анђах пурăнать. Тăрăшни мĕн вăл. Тăрăшни вăл хăна ху хистени. Епĕ ирхине ирех хире кайам та, хĕвел çуттипе савăнса, ўсен-ларан йапаласем çине пăхса, кайăксем йурланине итлесе, тĕнђе тăрăх уткаласа çўрем. Вăл тăрăшни пулмасть, кунта хăна ху хистени нимĕн те çук.

Епĕ çав хирех тата кĕтў хăваласа кайам; хирте хам мĕн тăвас тенĕ, ăна мар, хам ăçта кайас тенĕ, унта мар, выљăхсене ăçта илсе каймалла, çавăнта кайам, вĕсемшĕн мĕн тумалла, çавна тăвам. Кĕтў саланса ан кайтăр тесе, хама хистесе выљăхсене пуçтарам, тырă пуссине кĕрсе ан кайђђăр тесе, сыхлам вĕсене. Çак ĕнтĕ тăрăшни пулать, епĕ кунта хам мĕн тăвас килнине тумастăп,

мĕн тума кирлĕ, хама хам хистесе, çавна тăватăп.

Ĕç вăл çăмăлли те пур, йывăрри те пур; етем тăрăшнинђен ытти çынсене усă йе нумай пулаť, йе сахал пулаť. Йалтан хулана йывăр лав хыçĕнђен çуран утса пырасси кĕтӳ хыçĕнђен хирпеле утса пынинђен йывăртарах. Сӳре сӳреме суха сухаласинђен çăмăлтарах, утă çулма утă пуçтарасинђен йывăртарах.

Икĕ çын, кун каçиђђен ĕçлеççĕ, хакне иккĕш те пĕр пек илеймеççĕ: пĕри илет 3 тенкĕ, тепĕри 1 тенкĕ анђах. Вĕсем кун каçиђђен ĕçленĕ ĕç хакне пĕр пек илмен пулсан та, çынсем пур те вĕсем тĕрĕс илђĕç тесе шухăшлаççĕ; пĕри нумайрах тăрăшнипе укçине нумайрах илет, тепĕри сахал тăрăшнипе хакне те сахал илет.

2. Ĕç мĕн вăл? Ĕç тесе етем тăрăшнинђен пулакан усса калаççĕ. Вĕреннĕ çынсем ĕçе те виçеççĕ, акă мĕн майпа виçеççĕ. Пĕр пăта çĕртен пĕр фут (ђалăшăн çиђђĕмĕш пайĕ) çӳлĕшне çĕклесен, пĕр пай ĕç пулаť теççĕ; пур ĕçе те вара çав шайпа виçеççĕ. Ахалђ ђухне харпăр-хăй ĕçе харпăр-хăй виçипе виçеççĕ: утă çулас ĕçе-купа тăрăх виçеççĕ, тырă вырас ĕçе-кĕлте тăрăх виçеççĕ, хăма çурас ĕçе-çулĕ тăрăх миçе аршăнне пĕлсе виçеççĕ. Ĕçе тата ĕçлесе ирттернĕ вăхăтпа та виçеççĕ, çавăн ђухлĕ кун, çавăн ђухлĕ сехет ĕçленĕ теççĕ. Анђах халăх хушшинђе çынсем ĕçе вăхăт тăрăх виçме йурат-

маççĕ: ĕçе вăхăт тăрăх шутлама тытăнсан, вăхăта ахалех, ĕçлемесĕрех тăсма пултараççĕ.

Çапла ĕç ĕнтĕ вăл тăрăшнипе хăвăн ăсун вăйне пĕтерни, ўт-пў вăйне пĕтерни пулаť. Çав тăрăхран ĕç кирек мĕн тĕрлĕ пулсан та, ăна виçме май пур: есĕ çĕр кăмрăкĕ ђавса кăларатна, вăрман касатна, хăма çуратна, суха сухалатăн-и, тырă выратна, ађасене шкулра вĕрентетĕн-и, йе ђирлĕ çынсене пăхатна, çав ĕçсене пурне те шутнейĕрне тупма май пур.

3 Пĕр-пĕр йалта пĕр кунта пин пай ĕç туђђăр. Çав ĕçе ўстерме те пулаť, ђакарма та пулаť. Тăвата çын вăрманта кăк кăклаççĕ (хăртнă хăртаççĕ): малтанхи кун вĕсем икшерĕн пĕрлешсе кăклађђăр, çапла икшерĕн икĕ ушкăнлă пулса ĕçленипе вĕсем кун каçиђђен мĕн пурĕ 20 тунката кăлараççĕ. Тепĕр кунне вĕсем тăваттăшĕ те пĕрлешеççĕ те, риђаксем илсе ĕçлеме тытăнаççĕ, çапла пĕрле ĕçленипе вĕсем кун каçиђђен 20 тунката мар, 35 тунката кăлараççĕ. Çакăнта ĕнтĕ тăрăшни çав çавах; çынсем ĕçлеме май тупнипе ĕçĕ ўсĕнђĕ. Кăкламалли тунката нумай пулсан, çав тăвата çынах пĕр-пĕр машшина туйанĕç те, вара тен кун-каçиђђен çĕршер тунката кăлармa та пултарĕç. Етем ĕçленĕ ĕç çавăн пек ытти ĕçсенђе те ўсĕнме пултараť, çĕр ĕçленĕ çĕрте те, фабрик-завод таврашĕнђе те. Ĕç ĕçленĕ çĕрте мĕн ђухлĕ машшина нумайтарах, çавăн ђухлĕ çын ĕçлекен ĕç ўсĕмлĕ пулса пыраť.

IV. Соціалистсем мӗне вӗрентеççӗ, мӗн шухӑшлаççӗ вӗсем.

Соціалистсем вӗсем тӗрлӗ вӗрентеççӗ. Вӗсем вӗрентни хӑшӗ пурӑнӑçра усса килсе пырать. Вӗсем шухӑшланӑ шухӑш ырӑ, вӗсем етемсем хушшинҗе канӑçлӑх пултӑр, çӗр çинҗе ырӑлӑх пултӑр, теççӗ. Соціалистсен шухӑшӗпе пыра—киле тӗнҗере ак çапла пулмалла.

Йапала тавраш никамӑн та харпӑр-хӑйӗн пулҗмӗ; пӗтӗм çӗр, шывсем, вӑрмансем, çуртсем, вылҗӑх-җӗрлӗхсем, тумтир тавраш никамӑн та мар, пурин те, мӗн пур халӑхӑн пулӗ, пур йапала та хыснан пулӗ. Пурне те усӑ кӳрес тесе, çынсем пур те пӗр пек ӗçлесе пурӑнӗç, хӑйне мӗн кирлине вара пур те хыснаран пӗр пек илсе тӑрӗç. Пӗҗӗк аҗасем пурин те пӗр пек вӗренсе ӳсӗç. Никамӑн та, ни упӑшкин, ни арӑмӗн хӑйӗн ӑрасна мулӗ пулҗмӗ, вӑхӑтлӑха тытса тӑракан кирлӗ йапаласем анҗах пулӗç. Вӑл-ку усал ӗç, вӑрласси, çаратасси, çынна улталасси пулҗмӗ ун җухне, укçа тавраш никамӑн та пулҗмӗ, ун җухне йапала та никамӑн та хӑйӗн пулҗмӗ. Ун җухне вара, соціалистсен сӑмахӗпе каласан, çынсем райри пек ырӑ пурӑнӗç, пур те: нимӗҗсем, французсем, китайсем, вырӑссем пӗрле пурӑнӗç, епир җӑвашсем те вӗсемпе пӗрлех пурӑнӑпӑр. Çав райри пурӑнӑçа курас тесен, çын-

сен харпăр-хăй йапалине анђах пĕтермелле, мул çук çынсен (пролетаріи) пурин те пĕрлешмелле те, пĕр канашлă пулса пуйан çынсене хирĕç тăмалла, теççĕ. Тĕрлĕ çĕрте пурăнакан мулсăр çынсене пурне те пĕрлештерес тесе, соціалистсем *интернаціонал* тийекен ушкăн тунă. Интернаціонал тени халăхсен хушшинђи ушкăн тени пулаť. Çав тĕрлĕ халăхсен хушшинђи ушкăн вара çынсем тытса тăракан мула хирĕç, пуйан çынсене хирĕç тăма мул çук çынсене—пролетарисене—пĕрлештермелле пулнă.

Соціалистсем вĕрентни вырăссен кăмăлне хăшинне пит килнĕ, (тен ђăвашсен кăмăлне те хăшинне кайаť пулĕ вăл), вĕсем вара шухăшланă: Россіяри çынсем ушкăн ушкăнăн, темиçе çĕршер, пулĕç те, вĕсем вара пĕрле ĕçлесе хăйсене кирлĕ йапаласем: çурт-йĕр, тумтир, ытти йапаласем туйанса пурăнеç, тенĕ. Тата вĕсен сăмахне ĕненмен çынсем те пулнă, вĕсем ак çапла шухăшланă: çынсем пур ĕçе те пĕрле тăва пуçласан, пур те пĕр пек тăрăшса ĕçлейрĕç-и вара? тенĕ. Ĕçе пĕрле ĕçлемелле тусан та тăрăшакансем пулĕç, анђах ун ђухне вара тăрăшакан çыннине хăй тăрăшнинђен усă курмалла пулаймĕ, унăн тăрăшни ытти найан çынсемшĕн анђах пулĕ. çавăнпа унăн пит тăрăшас та килмĕ. Апла çын хăй тăрăшса ĕçленинђен хăй усă курмалла пулмасан, унăн тăрăшни ытти çынсемшĕн анђах пулсан, шурăм-пуçĕпе тăрса каçђен ĕçле-

кен те пулђмĕ, хушнинђен, кăтартса панинђен ытлашшине ĕçлекен те пулђмĕ. Вара вăл йенне кайсан, ĕç ђакса пырĕ, .кирлĕ йапала сахаллăнса пырĕ, çынсем те вара çука йулĕç. Пĕлекен çынсем, ăстана вĕреннĕ çынсем сахалланса пырĕç. Лайăх çĕр çинђе пурăнакан çынсем, пысăк шывсем хĕрринђе, тинĕс таврашĕнђе пурăнакан çынсем пуйса кайĕç, ытти вырăнти çынсем ђуханланса кайĕç. Хăш-хăш соціалистсем хăйсем пеккисемпе пĕрлешсе вырăне вырăнĕпе ăрасна йалсем туса çав хăйсем вĕрентнĕ пек пĕрле ĕçлесе пурăнма пуçланă, анђах вĕсем ниăçта та çапла пĕрлешсе ђипер нумайђђен пурăнайман, пĕр-пĕринпе килĕштерсе лайăх пурăнас вырăнне ĕçленĕ ĕç пирки вĕсем вăрçса тавлаша пуçланă: йулхав çынсем йалан хастарлисене, ĕçлеме тăрăшакан çынсене çĕнтерсе пынă, çавăнпа пыра—киле вĕсем саланса пĕтнĕ.

V. Нимĕђсен соціалистсем, нимĕђсен вăрçисем.

1870 çулта Французсемпе нимĕђсем хушшинђе вăрçă тапранса кайнă. Нимĕђсем Фрацузсенђен вăйлине пур те пĕлсе тăнă. Ĕçлесе пурăнакан Франціяри çынсем нимĕђсене: пирĕн çийе вăрçăпа ан килĕр, тесе йăлăннă. Нимĕђсем вĕсен сăмахне пăхман, пур те Французсем çине вăрçăпа кайнă, ун

ђухне нимӗђсем хушшинђе соціалистсем те нумай пулнӑ. Нимӗђсем вӑрҫӑпа пырса, Французсен хулине Парижа ҫӗмӗрме тытӑннӑ, Мец йатлӑ хулана, ҫав хула таврашӗнђи ҫӗре туртса илнӗ, тата 200 ҫултанпа тытса тӑракан ҫӗре (эльзас—лотарингія) туртса илнӗ; вӑрҫӑ вӑхӗтӗнђе хӑйсем пӗтернӗ укҫа вырӑнне Французсене 5 милліард тӳлемелле тунӑ; ҫав парӑма татма Французсен ҫын пуҫне 125 франк тӳлемелле пулнӑ. Ҫав вӑрҫӑ хыҫӗнђен кайран интернаціонал тийекен ушкӑна ҫырӑннӑ Франціяри соціалистсем ҫав ушкӑнтан пур те тухнӑ, нимӗђсем вара ҫӗнӗрен тата вӑрҫӑ кӑларас тесе хатӗрлене пуҫланӑ, вӗсем Россіяна хирӗҫ тӑма хатӗрлене пуҫланӑ; нимӗђсем вырӑссене хирӗҫ тӑма хатӗрленни пурне те курӑнса тӑнӑ. Нимӗђсем ҫӗнӗрен вӑрҫӑ кӑларма шухӑш тытсанах, вӗсем вӑрҫӑ тапраниђђен малтан укҫа нумайтарах пухса хурасшӑн пулнӑ. Вырӑссен Японіяпа вӑрҫӑ тапранса кайсан, нимӗђсем пире сийенлӗ ӗҫсем тума тытӑнђӗҫ.

1. Пирӗн тырра нимӗђ ҫӗрне йарас пулсан, пире пӑт пуҫне 60 пус пошлина тӳлеттеређђӗҫ.

2. Нимӗђ ҫӗрӗнђен Россіяна килекен таварсемшӗн илекен укҫана ђакарса пыђӗҫ, ҫавӑнпа вара нимӗђ таварӗ пирӗн патшалӑха шыв пек йухса киле пуҫларӗ, нимӗђ таварӗ нумай килнипе хамӑр патшалӑхри фабрик заводсем ахалђ тӑрса йула пуҫларӗҫ, завод-фабриксенђе ӗҫ ђарӑна пуҫларӗ, ӗҫлекен

ҫынсене хамӑр тырӑпа тӑрантарса усрас ҭухне, пирӗн тырра йӳн хакпа нимӗҭ ҫӗрне ӑсатаҭҭӗҫ. Ҫав вӑхӑтра ӗҫлесе пурӑнакан нимӗҭ ҫыннисем те интернаціонал тийекен ушкӑнран тухрӗҫ, анҭах вӗсем урӑх шухӑшпа тухрӗҫ. Ҫавӑнтан кайран нимӗҭсен соціалистсем пур те ҫапла каласа вӗренте пуҫларӗҫ: Германія патшалӑхӗ пур патшалӑхран та аслӑ, тетҭӗҫ; шкулсенҭе аҭасене пӗҭиклех Германія пуринҭен те аслӑ, тесе вӗрентеҭҭӗҫ.

Нимӗҭсем вӗсем хӑйсен пурӑнӑҫне, хӑйсен йӑлисене халӑха пӑлхатса улӑштарасшӑн мар, вӗсем хӑйсене мӗн кирлӗ законсене пӑхса тухса анҭах тӳрлетесшӗн, аванлатасшӑн; мӗн тусан мӗн пулаҭ тесе, вӗсем хӑйсен йӑлисене тӗрӗслесе пӑхасшӑн. Самананa улӑштарса, пурӑнӑҫ йӗркисене сасартӑк ҫӗнӗрен улӑштарса, вӗсем хӑйсене хӑйсем сийен тӑвасшӑн мар, вӗсем ӗлӗкхи пек хытӑ тӑрса вӑйлӑланасшӑн, мул нумайтарах пухасшӑн; ҫавӑнпа вӗсене ҫӗр нумай кирлӗ, вӗсем пӗтӗм тӗнҭери ҫӗре ҫавӑрса илсе, пӗтӗм тӗнҭере хӑйсем пуҫлӑх пуласшӑн.

Нимӗҭсем ҫак вӑрҫа пит ҳатӗрленсе пурӑннӑ, ӑна пур те пӗлсе, пур те курса тӑнӑ. Курнӑ-пӗлнӗ пулсан та, ҫавӑнтан шикленмен; нимӗҭсен соціалистсем нумай, соціалистсем ытти нимӗҭсене вӑрҫӑ тапратса йама ирӗк памӗҫ-ха, етем йунне тӑкасран ҭарӗҫ-ха вӗсем, тесе шанса пурӑннӑ. Епӗ Германіяра ҫӳрекеленӗ, унта пурӑнса епӗ хам нумай илтнӗ: Германіяри ӗҫлекен ҫын-

сем, хура халăх çыннисем вырăссен çĕрне хапсăнса кăна тăраççĕ.

Пирĕн çӳлти пысăк пуçлăхсем нимĕҫсене ĕненсе, вĕсем çине шанса пурăннă. Пирĕн патша хăй те нимĕҫ пекех пулнă, вăл Вильгельмăн таҫ-хурăнташех пулнă; патша арăмĕ ҫăн-ҫăн нимĕҫ хĕрĕ пулнă.

Вильгельм Россіяна хирĕç вăрçă кăларсанах, Бельгія патшалăхĕ çине вăрçăпа кайнă. Германіяри соціалистсем, ĕлĕк хăйсем вăрçă тавраш халăхсем хушшинҫе ан пултăр тесе вĕрентнĕ пулсан та, Вильгельм хушнине итлесе, ун хыçĕнҫен вăрçа кайнă. Çынсем хушшинҫе вăрçă-тавлашу ан пултăр, тесе калакан соціалистсем çине шаннипе, Франція патшалăхĕ те вăрçа хатĕр пулман; хатĕр пулмасан та, Французсем Россія хутне кĕрсе, Бельгія хутне кĕрсе, нимĕҫсене хирĕç вăрçăпа кайнă. Французсен малтан çарă сахал пулнă, нимĕҫсемпе çапăçса вĕсем пит нумай пĕтнĕ, çар йышлăлансан вара нимĕҫсене парăнми пулнă. Германіяпа Австрія хыçĕнҫен пирĕн патшалăха хирĕç тата турккăсемпе болгарсем тăҫĕç. Пыракиле нимĕҫсем вырăссене те, французсене те, сербсене те çĕнтере пуçларĕç, вĕсен майлă пулса вара нимĕҫсене хирĕç англичансем, Италія çыннисем, Америка çыннисем тăҫĕç. Нимĕҫсем Америка вăйлине пĕлсе, унтан хăраса, пирĕн вырăс çыннисемпе килĕшме те шухăшлаççĕ, анҫах вĕсен килĕшес тенĕ шухăшĕ пире пĕртте усăллă мар: ни-

мĕђсем пиртен туртса илнĕ çĕрсене пурне те хăйсен аллинђе хăварасшăн, тата пире укçа та тӳлеттересшĕн (контрибуція). Çав шухăшпа нимĕђсем пирĕн пата усал çынсене йађĕç; вĕсем ак çапла каласа вĕрентсе çӳреççĕ: вырăссен мĕн майпа та пулсан нимĕђсемпе килĕшмелле, теççĕ. Нимĕђсем хăйсен патшине Вильгельма Турра пăхăнса пурăннă пек пăхăнса тăраççĕ, тĕнђере çук ăслă Вильгельм тăрăшнипе епир, нимĕђсем, Россіяна та, пĕтĕм тĕнђене те çĕнтерсе илме пултаратпăр, тесе шухăшлаççĕ. Вырăссем çавна пĕлеççĕ пулсан та, илĕртекенсем каланă сăмаха ĕненсе, нумайĕшĕ вĕсем илĕртнĕ хыççăн кайаççĕ. Нимĕђсем ĕнтĕ славян халăхĕсене пурне те çĕнтерсе илнĕ, славян халăхĕсенђен пĕр вырăссене анђах пĕтĕмпех çĕнтерсе илеймен вĕсем, вĕсене анђах пăхăнтарса йывăр сӳсмен тăхăнтарайман.

Хăш усал çынсем пирĕн çынсене ак çапла каласа илĕртеççĕ: нимĕђсем те сирĕн пекех тăвасшăн, Вильгельм патшана хăваласа йарса, патшалăхри пĕтĕм çĕре, пĕтĕм мула халăха уйăрса парасшăн, çынсене пурне те пĕр пек телейлĕ, пĕр пек пурлăхлă тăвасшăн, тесе улталаççĕ. Нимĕђсем вĕсем ђăнах та çапла тума пултарĕç, вĕсем ђăнах та çапла тăвĕç; анђах хăйсен çĕрне мар, пирĕн çĕре, хăйсен мулне мар, пирĕн мула: нимĕђ çарĕсем пирĕн çĕр çине тата шалалла килĕç те, пирĕн çĕре пайăн-пайăн уйăрса пĕтерĕç. Германіяри соціалист-

сем хӑйсен патшалӑхӗнђи законсене тӗпђесе пӑхса анђах йусасшӑн, пирӗн патшалӑхри ӗҫсене вӗсем пӗтӗмпе тустарса тӑкса, улӑштарса йӑлтах ҫӗнӗрен тӑвасшӑн. Вырӑссен ҫар ушкӑнне, ҫар вӑйне вӗсем пӗтересшӗн, хӑйсене вӑйлӑлатасшӑн, Вильгельм патшине мухтава кӑларасшӑн. Ҫав шухӑшпа нимӗђсем хӑш хӑш ҫынсене пирӗн пата йанӑ. Пирӗн ҫынсем ӑна сисмеҫҫӗ, вӗсем ырӑ ҫын тесе, вӗсем илӗртнӗ хыҫҫӑн кайаҫҫӗ. Вӑл ҫынсем вырӑссене усӑллӑ ҫынсем пулсан, вӗсене нимӗђсем хӑйсем патӗнђен йаман та пулӗђђӗҫ.

Ӗлӗкхи саманара пирӗн хура халӑх ҫыннисене пит сахал вӗрентеђђӗҫ, ҫавӑнпа халӑх халӗ тӗттӗмре тӑрать те. Халӑх нимӗн пӗлменнипе нимӗђ хӑйӗн ђейелӗхӗпе вырӑссене тӗрлӗ майпала улталать те, ҫав ултава сисмесӗр епир, тӗттӗм халӑх, хамӑра хамӑр инкек тупса ларатпӑр. Нимӗђсем, тата нимӗђсен майлӑ ҫынсем пире ак ҫапла калаҫҫӗ:

Сирӗн тӑшмансем—французсемпе англичансем, епир нимӗђсем, сирӗн 17 кӗпӗрне ҫӗрне туртса илнӗ пулсан та, сирӗн тусӑрсем. Атӑр тӑвансем пек пулса пӗрлешер, пӗр-пӗринпе улӑштарар: есир пире ҫӑкӑрпа сахӑр парӑр, епир сире ерех парӑпӑр, теҫҫӗ. Ҫав нимӗђсем панӑ ерехе ӗҫсе, нумай та пулмасть, пӗр вырӑнта пирӗн темиҫе пин салтак вилсе пӗтнӗ.

VI. Нимĕђсем мĕн хушнине тумалла мар пирĕн, нимĕђсем хăйсемшĕн мĕн тăваççĕ, çавна тумалла.

Нумай вĕреннĕ çынсем, нимĕђсем те, ытти халăх çыннисем те, патшалăхри пурăнăç йĕркисене улăштарас мĕн пулсан, кирек хăçан та ак çапла тумалла теççĕ: халăха кирлĕ ĕçме—çиме, тумтир, ытти мĕн кирлĕ йапаласем ан ђакђăр, çителĕклĕ пулђђăр, çапла çителĕклĕ пулсан анђах пурăнăç йĕркине улăштарни халăха усăллă пулать. Пурăнăç йĕркине улăштарнă пирки халăха кирлĕ йапала сахалланмалла пулсан, вăл вара халăха сийен анђах тăвать, теççĕ. Нимĕђсем калаççĕ: пĕр-пĕр завод, йе фабрик, унăн йĕркине улăштариђђен, 1000 йапала тунă пулсан, унăн йĕркине улăштарсан кайран 1000 йапала вырăнне 800 йапала анђах ĕçле пуçласан, вăл вара майа килмест, çавăнпа вăл завод, йе фабрик йĕркине улăштарни халăха сийен анђах тăвать, теççĕ. Ĕç йĕркине улăштар, ĕçлекен çынсен пурăнăçне çăмăллат, анђах, вĕсем ĕçлекен ĕç ĕлĕкхинђен кайа ан пултăр. Лайăх машшинасем туйаннипе ĕлĕк ĕçлекен ĕçе сахал вăхăтрах ĕçлесе çитерме май пулсан, завод-фабриксенђе ĕçлекен çынсенĕн ĕç вăхăтне кĕскетме те йурать. Калуш тăвакан фабрикра ĕçлекенсем кунне 10 сехет ĕçленĕ ђух тавлăкне 1000 мăшăр калуш тăвађђĕç пулсан,

ĕçлекенсем кунне 8 сехет анђах ĕçлесен те, тавлăкне çав пин мăшăрах тăвас пулат; сахал вăхăтра нумай ĕç тăвас тесен, лайăх машшинасем туйанас пулат, апла тума май çук пулсан, ĕçлекен куна та кĕскетме йурамаст. Почтара ĕçлесе тăракан çынсем хăйсен ĕçне ђакарђĕç, хăйсене шалу ўстерттерђĕç. Ăна никам та хирĕç пулмарĕ, анђах çав вăхăтрах, çав çынсене шалу ўстернĕ пулин те, вĕсен ĕçĕ ĕлĕкхинђен те ңађар пула пуçларĕ: ђас—ђасах çырусем çухала пуçларĕç, çырусем вăхăтра çитми пулђђĕç. Çапла пулни халăха усăллă мар, апла тума йурамаст. Ĕçлес вăхăта ђакарнă пулсан, ĕçĕ ан ђактăр тесе, ĕçлекен çыннисене нумайлантармаллађђĕ. Пур те, Германіяри соціалистсем те, çапла тума тăрăшаççĕ: пайан çапла тусан, ыран мĕн пулассине шухăшласа тăваççĕ. Хăшĕ хăшĕсем анђах—большевиксемпе анархистсем (большевиксем вĕсем ытла пысăка хапсăнаççĕ, çавăнпа вĕсене большевиксем теççĕ, анархистсем—пуçлăхсем ан пулђђăр, тесе вĕрентеççĕ) ыран мĕн пулассине пĕлесшĕн мар; ыран мĕн пулассине нимĕн шухăшламасăр, ирĕксĕр туртса илсе пайанхи кунах хăйсен шухăшĕпе тăвасшăн. Халăха тытса тăрас ĕçе пирĕн алла парăр, епир сире хамăра ђас пĕлтерĕпĕр, тесе кăшкăраççĕ вĕсем. Нимĕђсем пирĕн пата çавăн пек кăшкăракан çынсене йараççĕ, хăйсем патшалăха тытса тăрас ĕçе çав карaçăварсен аллине нимĕнпе те памаççĕ, парас

та çук нихăçан та. Нимĕҫсем пек пулас мар-и пирĕн те?

Çав большевиксемпе анархистсене пирĕн мĕн тумалла? Мĕн туса тавлашма пултаратпăр епир вĕсемпе?

Ирĕклĕ çĕрте епир вĕсемпе сăмахпа калаçса анҫах тавлашма пултаратпăр, тата çынсене вĕрентсе каласа парса, вĕсене хирĕç тăма пултаратпăр. Вĕсенҫен курса, пыра—киле çынсем хăйсемех ăнланĕç, шухăшлакан пулĕç, хăйсем мĕн тунине ăнлакан пулĕç: пĕринне туртса илсен, тепĕринне те туртса илме ал̆ă пырат̆; çынсем пĕр-пĕринне туртса иле пуçласан, тĕп-пулма анҫах вара; çавна çынсем пыра-киле хăйсемех ăнласа илĕç.

Çавăнпа куштан анархистсемпе куштан большевиксем вĕреннĕ çынсемпе халăх умĕнҫе хăйсем тавлашма пултарас çуккине пĕлсе, вĕреннĕ çынсене халăх хушшине кӳртмеççĕ, кĕрсен те вĕсене ирĕксĕрех вăрçса, тĕртсе кăларса йараççĕ. Анархистсемпе большевиксем халăха пăтратса çӳреççĕ пулсан та, пур те вĕсен сăмахне ĕненсех пĕтереймеççĕ, çавăнпа тĕрлĕ ĕçе суйланă çĕрте ытти соціалистсем, меньшевиксем, вĕсене çĕнтерсе пыраççĕ. Халĕ ытти соціалистсем большевиксене пур те хирĕç пыраççĕ, вĕсене кура ытти çынсем те хирĕç тăраççĕ.

VII. Ытти соціалистсем мĕне вĕрентессĕ, мĕн шухăшлассĕ вĕсем.

Соціалистсем вĕсем тĕрлĕ вĕрентессĕ, вĕсем мĕн вĕрентнине нумайĕшне йышăнма та йурат. Вĕсем шухăшланă шухăш-çĕр çинђе пурне те ырă пурăнмалла пултăр тени—ырă шухăш вăл, анђах вĕсем мĕн шухăшланине пурне те халĕ нийепле те тума çук. Соціалистсен шухăшĕпе малашне тĕнђере çапла пулмалла. Никамăн та харпăрхăйĕн мул пулђмĕ. Пĕтĕм çĕр, вăрмансем, çырмасем-шывсем, вылђăх-ђĕрĕлĕхсем, тумтир тавраш, пўрт-çурт тавраш пур йапала та мĕн пур халăхăн пĕрле пулĕ. Пурне те усă кўрес тесе çынсем пур те ирĕкрен ĕçлесе пурăнĕç. Хăй ĕçленинђен çынна хăйне усă курмалла пулђмĕ; апла хăй ĕçленĕ ĕçрен хăй усă курмалла пулсан, хастарлă ĕçлекен çынсем хăйсем валли лайăх тумтир, лайăх апат ыйта пуçлĕç. Ађасене пурне те пĕрле, пурне те пĕр пек вĕрентсе ўстерĕç. Авланса кађђа кайса арпа-арăма ĕмĕрлĕхе пĕрлештересси—мĕн пулђмĕ, ун вырăнне арçынсемпе хĕрарăмсем ирĕккĕн вăхăтлăха анђах пĕрлешсе пурăнĕç; арçынĕ те, хĕр-арăмĕ те хăйне мĕн кирлине пурне те халăхран пĕр тан илсе тăрĕ. Хĕр-арăмсем ађисене те хамăн тесе каламĕç, ађасене пăхса ўстерме çавăн йађĕпе лартнă çуртсене леçсе парĕç. Укçа мĕн пулђмĕ, çавăнпа вăрлас, çаратас ĕç те, ытти усал

ĕçсем те пуљмĕç. Упăшкипе арăмĕ хуш-
шинђе кӳлешесси, çиленесси мĕн пуљмĕ,
кама йуратас тенĕ, çавна йуратма ирĕк пулĕ
ун ђухне.

Пĕр-икĕ сăмахпа каласан, ун ђухне çын-
сем райри пек ырă пурăнĕç. Ĕçлеме те ĕçлес
килнипе анђах ĕçлĕç, хăйсене мĕн кирлине
пурне те, халђхи пирĕн сăмахпа каласан,
пĕр укçасăрах хыснаран илсе тăрĕç, ун ђухне
никама та хистесе ирĕксĕр ĕçлеттермĕç.

Соціалистсен шухăшĕ çапла. Хăш ђухне
вĕсен шухăшĕ тата малалла та кайаť: хĕлле
пулсан çынсене пурăнма сивĕ çĕртен ăшă
çĕре куçарĕç, çула пулсан шăрăх вăхăтра
вĕсене кайалла Россіяна, Германіяна илсе
кайĕç. Çакна калана ђухне мана халлапра
калана анђăк шухăшлани аса килсе кайаť.
Хĕлле сивĕре анђăк калаť тет: хăçан çула
пулĕ-ши, çула пулсан, шăмăран пӳрт тăвăт-
тăм, тесе калаť тет; çула пулсан шăрăхра
çав анђăк тата çапла калаť тет: хăçан хĕл-
лене кĕрем-ши, хĕлле пулсан, йуртан пӳрт
тăвăттăм, тесе калаť тет. Соціалистсен те
çапла, малалли шухăшĕ вĕсен пит пысăк,
анђах вĕсен шухăшĕ халђхи çынсем пурăннă
ђухне нихăçан та çитес çук.

Халăха усă тăвас тесе тăрăшакан çын-
сем халĕ те пур вĕсем: пĕри шыва путса
вилекен çынна хăтарас тесе шыва сикет;
тепĕри выртса йулнă ађана вутран хăтарас
тесе, вут тивнĕ пӳрте кĕме хăрамасť; пĕр
укçасăр халăхшăн тăрăшакан çынсем те пур,

анҫах хӑй ҫинҫен, хӑйён аҫи-пӑҫисем ҫинҫен пёр шухӑшламасӑр ёмёрне халӑхшӑн анҫах тӑрӑшса ирттерекенни сахал вӑл. Ҫавӑн пек ҫын Хусанти малтанхи архіерей Гурій пулнӑ тесе калаҫҫё. Епё хам ҫавӑн пеккине пёр ҫынна анҫах пёлетёп (епё ӑна пёле пуҫланӑ ҫухне вӑл 40 ҫултаҫҫё). Ҫав епё пёлекен ҫын хӑй ҫинҫен нимён шухӑшламасӑр 30 ҫул халӑхшӑн тӑрӑшса ёҫлесе пурӑнҫё, Николай Иванович Ильминскій вӑл. Ырӑ ҫынсене епё нумай курнӑ, нумайёшне пёлетёп; вёсем ҫухӑн ҫынсене пит хёрхенеҫҫё, вёсем ытти ҫынсемшён анҫах тӑрӑшса ёҫлесе пурӑнмаҫҫё, хӑйсемшён те тӑрӑшаҫҫё. Ҫав пётём ҫёр ҫинҫи ҫынсем: китайсем, негрсем, малайцсем пёрле пурӑнас рай пулса кайтӑр тесен, пирён йӑхлӑ ҫынсем мар, урӑх ӑруран ҫуралнӑ ҫынсем кирлё, вёсем вара, пирён пек, хӑйсемшён тӑрӑшмёҫ, пёр ытти ҫынсене усӑ кӳрес тесе анҫах тӑрӑшса ёҫлесе пурӑнёҫ.

Пурӑнӑҫ йёркине соціалистсем вёрентнё пек тума пит йывӑр, ҫав ёҫе тунӑ ҫухне акӑ мёне манмалла мар. Пурӑннӑҫем ҫынсем ёрҫесе пыраҫҫё; Петр Великій вӑхӑтёнҫен вара, икё ҫёр ҫул хушшинҫе, Россіяра халӑх 13 хут ӳснё, Россіяра халӑх халё мён пурё 190 милліона ҫитет. Пурӑна—киле 400 милліона та ҫитё, патшалӑхри ҫёр хутшӑнасси пулаймё, ҫав-ҫавах тӑрё, йе кёҫёнленсе кайё.

Мусульмансем Мускав хулинҫе хӑйсен пухӑвёнҫе акӑ йепле сӑмах пётерҫёҫ: Баш-

кир çĕрĕ (губ. Уфимская, Оренбургская, Пермская), Киргиз çĕрĕ (Уральская, Тургайская, Акмолинская, Семипалатинская, Семирѣченская области), тата Средняя Азія тийекен çĕр харпăр-хăй ăрасна патшалăх пулмалла, ытти халăхсене унта куçма халех ђармалла, Сибире куçма та ђармалла, тенĕ. Çав ырăнсенђе, ырăссене йарас мар тенĕ çĕрсенђе, çынсем (пур те мусульмансем), çĕр тĕлĕшĕнђен пиртинђен ирĕкрех пурăнаççĕ. Тĕрлĕ ырăнта кашни тăваткăл çухрăм çĕр çинђе йалта пурăнакан çынсем акă мĕн ђухлĕ:

Въ	Кіевской губерніи	90
„	Полтавской	78
„	Волынской	61
„	Харьковской, Воронежской, Орловской по	60
„	Казанской	49
„	Уфимской	27
„	Оренбурской	12
„	Семирѣченской	$3^3/_4$
„	Уральской	$2^1/_2$
„	Акмолинской	$2^1/_2$
„	Семипалатинской	2
„	Тургайской	$1^3/_4$

Çакăнта кăтартса панă кайранхи 7 кĕпĕрнесем пит пысăк. Çĕр Хусан кĕпĕрнинђе мĕн пурĕ те 56 пин тăваткăл çухрăм анђах. Сав пысăк кĕпĕрнесене Хусан кĕпĕрнипе танлаштарсан, вĕсенчен Хусан кĕпĕрни пекки акă миçе тухат.

Уфимская 2

Оренбургская	3
Уральская	5½
Семирѣченская	6
Тургайская	6¾
Семипалатинская	7
Акмолинская	9¼

Çапла мусульмансем хӑйсен шухӑшӗпе çав тери пысӑк çӗр çине, Хусан кӗпӗрнинђен 40 хут аслӑ çӗр çине ытти халӑхсене куçма çул хупса хурасшӑн, Сибире те йарасшӑн мар вӗсем ытти çынсене. Европари Россія патшалӑхӗнђен сивӗ йенђи, тырӑ пулмаҥ 4 кӗпӗрнене кӑларсан, тата хӑйӑр вӗçсе выртакан Аçтӑрхан кӗпӗрнине шутламасан, Европари Россія патшалӑхӗнђе çӗр мӗн пурӗ 50 Хусан кӗпӗрни ђухлӗ анђах пулаҭ.

Çакӑнтан лайӑх курӑнаҭ ӗнтӗ, пирӗн çынсем çӗре кирек йепле уйӑрсан та, пыракиле хамӑр çӗрти тырӑ хамӑра çитеймӗ. Хӗвел-анӗç йенђи, нимӗђсен аллине кайнӑ 17 кӗпӗрнере пурӑнакан çынсем пирӗн пата тарса килнӗренпе, халӗ те пирӗн хамӑр тырӑ хамӑра çитми пула пуçларӗ. Вӑхӑтлӑха лартнӑ халђхи пуçлӑхсем тахӑçантанпах тырӑ çитменнипе патшалӑха йывӑр килет тесе—ахалђ çынсене тырӑпа сут-тума ђарђӗç, çар çыннисене тӑрантарма тесе, халӑха тӑрантарма тесе, пӗтӗм тырра-пулла хыснана туртса илђӗç.

Çав тырӑ ӗçӗ, халӑха тӑрантарас ӗç пит пысӑк ӗç, вӑл ӗçе пӗр шухӑшламасӑр туртса илсе тума йурамасҭ. Вӑл ӗçе пӗтӗм халӑхпа

пĕрле шухăшласа тăвас пулаť. Тырра-пулла çынсем çĕр ĕçлесе туса тăраççĕ, халăх çисе тăранса пурăнакан йапаласем пур те çĕр çинђе пулаççĕ. Çавăнпа çак саманара соціалистсем пуринђен ытла çĕр çинђен сӳтсе йавса калаçаççĕ, пур ĕçрен ытла çĕр ĕçне туса хурасшăн.

VIII. Çĕр ĕçĕ.

Çĕр ĕçĕ çинђен каласнă ђухне нумайĕшĕ çав ĕçе латин сăмахĕпе—аграрный ĕç теççĕ. Аграрный тени *хирти* тени пулаť. Епĕ хирти ĕç тесе каламастăп, çĕр ĕçĕ тесе калатăп. Халĕ пĕр хир çинђен анђах тавлашмаççĕ, çарансем çинђен те, вăрмнсем çинђен те, сăртсем çинђен, сăрт айĕнђе пур йапаласем çинђен те калаçаççĕ.

Çĕр ĕçĕ çинђен калаçни—çынсене çĕнĕрен çĕр тăрласа касса парас ĕç çинђен калаçни пулаť вăл. Хура халăх çыннисен çĕр сахаллине пур те пĕлеççĕ, вĕсене çĕр кирлине те пĕлеççĕ, вĕсене çĕр урăх памасан та çитет тесе калакан никам та çук. Çынсене çĕр йепле ӳстерсе памалла-ши, ăçтан тупса памалла-ши? мĕн пур сăмах çавă анђах, пур те çавăн çинђен анђах тавлашаççĕ. Хреçђенсем хăйсем—тăрласа парас тенĕ çĕре хăйсен йалĕ таврашĕнђе илесшĕн; инçе çĕре, йут кĕпĕрнене куçмасăр илесшĕн. Çав шухăша хирĕç калаçакан та çук. Анђах пĕр никам куçмасăрах, хреçђенсем халĕ çисе

тăракан çĕр ӳсейĕ-ши вара? Сахал çĕрлĕ çынсене çĕр ӳстерсе касса памалăх пур йалсенђе те ытлашши выртакан çĕр пур-ши вара? Паллах куранса тăрат, Европари Россія патшалăхĕнђе ытлашши çĕр çукпа пĕрех, ирĕклĕ çĕрсене илес тесен, хăшин хăшин хĕвел—тухăç йенђи кĕпĕрнесене, Сибире куçмалла пулат, апла куçмасан, халĕ çисе тăракан çĕре нийепле те ӳстерес çук; пуринђен ытла ђăвашсем пурăнакан вырăнсенђе ытлашши выртакан çĕр çук. Анђах ху çуралса ӳснĕ çĕр-шыва пăрахса, никамăн та инçетри пĕлмен çĕре куçса кайас килмест; унта кайас пулсан, укçа та нумай пĕтет, терт те нумай курмалла пулат, çавăнпа пурин те килтех пурăнас килет.

Пур те çĕр касса парасса кĕтеççĕ, халĕ çисе тăракан çĕр çумне çĕнĕрен касса тăрласа парĕç, тесе ĕмĕтленеççĕ. Çав çĕнĕрен тăрласа пана çĕр йулашки пулĕ, унтан кайран урăх касса пама çĕр ниăçтан та тупăнмĕ. Пурăна-киле халăх татах ĕрђесе кайĕ, çĕр татах сахал пулĕ, ун ђухне вара урăхран çĕр ниăçтан та ĕмĕтленме пулђмĕ. Çавăнпа çак-çĕр касса парас ĕçе туна ђухне тата малашне мĕн пулассине те пĕлсе, шухăшласа тăвас пулат.

Епир халђхи ĕç çинђен анђах калаçăпăр. Пирĕн кунта ирĕк выртакан çĕр пит сахал; хысна çĕрĕсене хреçђенсем хăйсем тара илсе пурăнаççĕ, çĕр нумайтарах тытса тăракан çынсем хăшĕ хăйсемех сухаласа

акса тăраççĕ, йе çурмалла ĕçлеттереççĕ, хăшĕ тата кӳрĕшри йалсенђе пурăнакан хреçђенсене тытса ĕçлеттереççĕ. Çав хăйсем ĕçлеме ĕлкĕреймен çĕрсене хуçисенђен илсе, ĕçлекен çынсене валеçе панă ђухне, çĕр ĕçне тӳррипе тăвас пулаť, пĕрне çĕр панă ђухне тепĕринђен çĕре ахаљ туртса илме, ăна çука хăварса кӳрентерес пулмасť. Хреçђенсем халĕ шухăшланă пек тăвас тесен, вĕсене çĕр тăрласа панă ђухне, çĕнĕ çĕре куçармасăр май килнĕ таран çывăхри çĕрсене касса парас пулаť, халиђђен йут çĕр çинђе ĕçлесе пурăннă çынсене те манма йурамасť.

Халăха çĕр тăрласа панă ђухне йепле памалла çĕре: килсерен-и, йат тăрăх-и, йе йал йађĕпе касса памалла-и?

Çак ĕç çинђен хреçђенсем хăйсем тĕрлĕ калаçаççĕ, ăçта нумайранпа çĕре валеçмесĕр çисе пурăннă, çавăнта çынсем тăрласа парас тенĕ çĕре кил тăрăх илесшĕн, хăш йалсенђе тата йат тăрăх, ђун тăрăх çĕнĕрен хисеплесе кастарасшăн. çак ĕçпе пур çынсене те пĕр канаша кӳртме пит йывăр, ăна патшалăхăн пулас пухăвĕ те (Учредительное Собраніе) канаша кӳртеймĕ; хăш шухăшпа тăвас тийекен нумайтарах, çапла тăвас тесе калама та йурамасť: нумайĕннисен те хăйсен шухăшĕпе сăмахĕ тĕрĕс, сахаллисен те сăмахĕ суйа мар. Тăрласа парас çĕре мĕнле касса памалла тесе ыйтсан, ун çинђен те çынсем тĕрлĕ калаçаççĕ. Пĕр йышшисем ак çапла калаçаççĕ: çĕре халăхпа çисе тăрса,

çĕр пирки пĕр-пĕриншĕн хута кĕрсе, епир ĕнтĕ çука йерсе кайрăмăр; çитĕ ĕнтĕ пире апла тарăхса пурăнма, теççĕ. Тепĕрисем тата çапла калаççĕ: çак йулашки çулсенђе Столыпин кăларнă законпа пурăнса, нумайĕшĕ пĕр шит çĕрсĕр йулђђĕç; çĕре йалпа тытса тăнă пулсан, çĕр сахалшар тивсен те, пĕр нимĕн çĕрсĕр никам та тăрса йулман пулĕђђĕ, теççĕ.

Соціалистсем çак çĕр ĕçне ак çапла тăвасшăн. Вĕсен шухăшĕпе пĕтĕм çĕре халăхăн тумалла, çĕр харпăр-хăйĕн никамăн та пулмалла мар. Çав халăха пулнă çĕре вара çынсене уйăрса памалла, теççĕ. Германіяри соціалистсем тата шухăшлаççĕ: çĕре çапла уйăрса парсан, çĕр пурне те çитĕ, пурне те пĕр тикĕс тивĕ, пур те вара çĕртен, çĕр ĕçлĕшĕнђен тутă пулĕç, вара пурне те аван пулĕ, теççĕ. Хулара урăх ĕçпе пурăнакан çынсене те çĕр пама май пур, тесе йăпатаççĕ вĕсем. Анђах çав етем ĕçлесе тăранса пурăнакан çĕре никамăн та мар туни халиђђен ниăçта та пулман вăл. Вырăс халăхне, çурри ытла нимĕн вулама пĕлмен çынсене, çĕре çапла тума хушаççĕ; çĕр харпăр-хăйĕн никамăн та ан пултăр, çапла тăвăр есир, теççĕ.

Апла тума епĕ шикленетĕп. Нимĕђсем хăйсем пур те тенĕ пек хута вĕреннĕ çынсем, вĕсем нумай вĕреннĕ, ăста çынсем; вĕсем малтан, хăйсем çапла туса пăхђăр, мĕн пулнине, мĕн майа килнипе килменнине епир

куръттъмър вара. Нимъђсем çав ёçе (çёр никамън та харпър хъйён ан пултър тенё ёçе) хъйсем патёнђе тъвасшън мар, пирён патъмърта тутарса пъхасшън; пире илёртме, пире усала вёрентме усал çынсене йађёç пирён пата: ан тив, выръссем çёр ёçё çинђе тавлашса кайса, върçса çапъçса пётђёр, теççё.

Çёр ёçне туса татнъ ђухне пирён хамъра йепле усаллъ, хамър ъспа çапла тъвас пулаť; пёр нимён шухъшламасър çын илёрт нё хыççън кайма йурамасť, апла хътланса епир инкек анђах тупатпър. Аставър-ха есир: —çёре хуçинђен хыснана туртса илмелле тусан, вара пўрте-çурта та, укçана та, ытти пур йапаласене те туртса илес пулаť. Пёр пёр çын çур ёмёрне търъшса ёçлесе укçа тупнъ пултър, çав укçапа въл çёр илнё, те пёри пўрт-çурт тунъ, хъшё тата выљђъх—ђё рёлёх туйаннъ, йе услам (%) илес тесе укçине банка хунъ. Çёре анђах туртса илмелле тусан, малтанхи вара питех те телей сёр çын пулаť, кайранхисем телейлё çынсем пулаççё: унън укçа та çук, çёрне туртса илнипе çёр те çук; лешсен çёр çук, ун вы рънне çурт пур, йе выљђъх—ђёрёлёх пур, йе укçа пур. Çапла çёре хуçинђен ирёксёр туртса илсен, çынсен харпър—хъй мулё пётёмпе пётсе ларма пултараť; çыннънне пёр йапа лине ирёксёр туртса илсен, тепёринне вара ытти йапалисене туртса илмелле пулаť. Въл йенне кайсан вара етем тарласа търъшса ёçленё ёç пётёмпе харама кайаť, етемён пурăнăçё те малалла кайаймё вара.

Хура халăха çĕр кирлине пур те пĕлеççĕ, çав çĕре панă ђухне ĕçе тĕпĕ—йĕрĕпе шухăшласа, тӳррипе туса парас пулаť. Хреçђенсем хăйсене тăрласа парас çĕре хăйсем таврашĕнђе илесшĕн. Вĕсен таврашĕнђе çĕр пурне те çитмест, хăшин те пулсан çĕнĕ çĕре куçмалла пулаť. Камăн куçмалла? ăçта куçмалла? Çак ĕçе тунă ђухне çапăçса, кам ăçта ĕлкĕрнĕ, çавăнта кайтăр, тесе тума та йурамасť; кирек кам çĕрне те пĕр укçасăр туртса илме йурамасť. Хреçђенсем хăйсем тытса тăракан çĕр хисепĕ ытти çĕр тытса тăракан хуçасен çĕрĕнђен сахал мар. Çĕр тытса тăракан çынсем нумайĕшĕ çав çĕре хăйсем те укçа тӳлесе туйаннă. Тăрласа парас тенĕ çĕре халĕ пур те ахаљ, пĕр укçасăрах илесшĕн, ĕлĕк вăл çĕре илнĕ ђух укçа тӳлесе илнĕ, хăшĕ çав çĕршĕн халĕ те тӳлесе тăраççĕ. Тăрласа парас çĕре çынсене ахалех парсан, çĕр хуçисем апла хурлăха йулаççĕ, хурлăха йулнăскерсем вĕсем вара çĕршĕн хыснана тӳлес парăмне те тӳлеме пăрахĕç. Çав тăрласа парас тенĕ çĕре—çĕр хуçисене хурлантармасăр, çынсене укçасăр парас тесен, йепле тумалла? Ăна ак çапла тума пулаť: çĕр хуçине çĕршĕн тӳлес укçана çĕр илекен çынсене анђах тӳлеттермелле мар, çав çĕршĕн хуçана парас укçана пĕтĕм патшалăх çине, патшалăхри пĕтĕм халăх çине сулса йарас пулаť, вара çĕр хуçине те хурланмалла пуљмĕ, çĕршĕн укçа тӳлеме те йывăр пуљмĕ.

Çав тăрласа парас çĕршĕн тӳлесси çинђен калаçма тытăнсан, хăшĕ-хăшĕ çав сăмаха хăлхана та ђикмеççĕ: ĕçлекен çынна çĕре ахалех памалла, тесе анђах кăшкăраççĕ вĕсем. Мĕн ыйтакан çынна пурне те пама çĕр пулсан, çĕре ђăнах та пĕр укçасăрах пама йурĕђђĕ, анђах пирĕн патшалăхра сахал çĕрлĕ çынсем пит нумай; тăрласа парас çĕре панă ђухне, çынсене мĕн ыйтнă таран пурне те пама çĕр çитес çук, тата çĕрне те пурне те пĕр пек пама май пулаймĕ: тăрласа панă ђухне хăшне нумайтарах, хăшне сахалтарах памалла пулĕ. Тата пирĕн Россіяра пĕр çĕрсĕр çынсем те пит нумай, 50 çул ĕлĕк хреçђенсене улпут аллинђен ирĕке кăларсан, хăшĕ-хăшĕ панă çĕре çавăн ђухнех сутса йарса, çĕрсĕр тăрса йулнă; хăщĕ тата пыра—киле йалти пурăнăçа пăрахса, пурăнма хулана куçса çĕрсĕр тăрса йулнă. Халĕ çав çынсем татах çĕр илесшĕн пулĕç, хăшĕ илес тесе калаçаççĕ те. Тата хăш-хăш çĕрсемшĕн хыснана, йе банка укçа тӳлемелле, çав тӳлес укçана камăн та пулсан тӳлес пулаť. Çĕршĕн укçа тӳлесси çинђен калаçсан, çынсем укçа тӳлес маршăн ак çапла калаççĕ: улпутсем çĕре ĕлĕк хăйсем ахалех илнĕ, халĕ пирĕн вĕсене çĕршĕн укçа мĕншĕн тӳлес, теççĕ. Халĕ улпутсем тытса тăракан çĕр хреçђенсем тытса тăракан çĕртен те сахалтарах: улпутсем хăйсен çĕрне хура—халăх çыннисене банкăсем урлă сутса пĕтернĕ, хресђенсем улпутсенђен çав çĕре

хӑйсем тарласа ӗҫлесе тупнӑ укҫапа илнӗ. Ӗлӗк патшасем панӑ ҫӗре ахалђ илме йураҭ теме те пулаҭ; кам ҫӗре хӑй ӗҫлесе тупнӑ укҫапа илнӗ, ҫав ҫыннӑнне ҫӗрне ахалђ илме нийепле те май килмест.

Ҫӗршӗн укҫа тӳлесе, пирӗн татах хамӑр ирӗке ҫухатса, ҫынсен тарҫи пулас-и, теҫҫӗ. Хамӑр ирӗке ҫухатасси, хамӑра усал тӑвасси, никамран та мар, хамӑртанах килет вӑл. Ӗлӗк Россія ҫыннисем темиҫе ҫӗр ҫул улпутсен тарҫисем пулса пурӑннӑ; ун ђухне ҫынсем пурӑнасса та тарҫӑра пурӑнасшӑн пек анђах пурӑннӑ, ҫав-тери йӗркесӗр, нађар пурӑннӑ. Патша тарҫи пулма пӑрахни ултгӑмӗш уйӑх анђах халӗ, епир йӗркеллӗ пурӑна пӗлмесӗр, хамӑр валли ҫӗнӗрен тата инкек хатӗрлетпӗр. Ӗлӗк вырӑс ҫыннисем хӑйсем пӗр-пӗринпе килӗштерсе, пӗр канашлӑ пурӑна пӗлеймен пирки тутарсене 250 ҫул пӗр ахалех укҫа тӳлесе пурӑннӑ; хӑйсене кирлӗ ӗҫе хӑйсем тӑвас ђухне, тутарсене ђӗнсе, вӗсем урлӑ туса тӑнӑ.

Ҫыннӑнне туртса илни халӑха анђах пӑтратаҭ вӑл, ӑна пур те пӗлеҫҫӗ, пӗр суккӑр анђах курмасҭ. Халӑх пӑтранса кайсан вара, самана та тӗк-тӑраймасҭ, самана пӑтранса кайсан, халӑх пӑлхана пуҫласан, вара йут халӑхсен алли әйне кӗрсе ӳкме те инҫе мар.

Ҫӗре ахалђ илес тийекенсем ак ҫапла калаҫҫӗ: тӑрласа парас ҫӗршӗн те укҫа тӳлемелле пулсан, апла укҫа ӑҫтан ҫитерес,

ăçтан укçа тупас? теççĕ. Укçа тупма май пур. Йывăр ан пултăр тесен, ак çапла тумалла: тăрласа парас çĕршĕн тӳлес укçана, ĕлĕкхи пек, пĕр çĕр илекен çынсене анђах тӳлеттермелле мар, патшалăхри пур çынсене те тӳлеттерес пулаť. Çав тăрласа парас çĕршĕн çĕр хуçисене укçа тӳлес пулсан, вĕреннĕ çынсем хисепленипе, çуллен 200 миллiон тенкĕ тӳлес пулаť, патшалăхри ытти парăмсемшĕн çуллен 2500 миллiон тенкĕ тӳлемелле. Çак хисепрен пирĕн патшалăхăн вăрçă пирки пулнă парăмсемшĕн $12^1/_2$ тенкĕ тӳленĕ ђухне, тата 1 тенкĕ çĕршĕн тӳлемелле пулаť; 12 тенки нимĕђсемпе вăрçнă пирки тӳленипе харама кайаť пулсан та, вун-виççĕмĕш тенки харама каймасť, вăл укçа халăха тăрласа парас çĕршĕн каймалла пулаť. Пирĕн калаççĕ: нимĕђсене укçа тӳлеттерес мар, нимĕђсем пирки пулнă сийене хамăрах ђăтăпăр, теççĕ; хамăр çынсен çĕрне, ĕçлесе тупнă укçапа илнĕ çĕрсене пĕр пуссăрах, ахалех туртса илесшĕн, çапла туса хамăрăннисенех тĕп-тăвасшăн.

Çынсен çĕрне ахалђ, пĕр пус укçасăр туртса илме пире никам та мар, çав нимĕђсем хушса йанă çынсемех вĕрентеççĕ. Çак вăрçă вăхăтĕнђе епир нимĕђсенђен мĕн ђухлĕ сийен куртăмăр, çав сийене пирĕн нимĕђсенђен шырама кирлĕђђĕ. Тата çавна та манмалла мар: нимĕђсем çак вăрçă вăхăтĕнђе пирĕн çĕре мĕн ђухлĕ туртса илђĕç. Нимĕђсем пиртен туртса илнĕ çĕре: хыс-

на çĕрĕ, удѣл çĕрĕ, хуçасем тытса тăракан çĕр, çавна пурне те хисеплесен, хамăр тытса тăракан кĕпĕрнесенҫе хуçасем тытса тăракан çĕр (частновладѣльческая) ун çумĕнҫе пиллĕкмĕш пайĕ анҫах. Нимĕҫсем польшари 9 кĕпĕрнене, тата Холм кĕпĕрнине туртса илҫĕç. Çав кĕпĕрнесенҫе çĕр мĕн пурĕ $112^1/_2$ пин тăваткăл çухрăм. Нимĕҫсем тата çак кĕпĕрнесенҫе акă мĕн ҫухлĕ çĕр туртса илҫĕç:

Курляндская	$23^3/_4$	пин	тăваткăл	çухрăм.
Вильна . .	375	„	„	„
Гродно . . .	328	„	„	„
Ковно . . .	261	„	„	„
Витебск . .	414	„	„	„
Минск . .	714	„	„	„
Волынск .	518	„	„	„
Пololьск . .	279	„	„	„

Мĕн пурĕ 3026 пин тăваткăл çухрăм, йе 300 миллiон десятина йахăн.

Россiяра харпăр-хăй аллинҫе тăракан çĕр мĕн пурĕ те 75 миллiон десятина анҫах, çав 75 миллiонтан çурри тенĕ пек улпутсен аллинҫе, çурри хреçҫенсен аллинҫе. Çав 75 миллiонтан, 1909 çулта çĕнĕ çул умĕн хисепленипе, çынсем харпăр хăй аллинҫе тытса тăракан çĕр, çак кĕпĕрнесенҫе акă мĕн ҫухлĕ пулнă.

Вильна кĕпĕрн . .	1535	пин	десят.	
Гродно „ . .	1138	„	„	
Ковно „ .	1713	„	„	
Витебск „ . .	1578	„	„	

Минск	„	. . 4577	пин.	десят.
Волынск	„	. . 2536	„	„
Подольск	„	. 1508	„	„
		Мĕн пурĕ 14565	пин	десятина.

Нимĕҫсем тата пирĕнне Волын кĕпĕрнипе Подольск кĕпĕрнине пĕтĕмпех туртса илме шухăшлаççĕ, нимĕҫсем çав икĕ кĕпĕрнене туртса илме тахăçантанпах шухăшланă, вăрçа та çавăншăн кăна тенĕ пек тапратса йанă вĕсем.

Нимĕҫсем туртса илнĕ 17 кĕпĕрнерен пуçне Европари Россія патшалăхĕнҫе харпăр-хăй тытса тăракан çĕр мĕн пурĕ те 60 милліон десятина анҫах йулаť, вăл нимĕҫсем туртса илнĕ 300 милліон десятина çумĕнҫе 5 пайĕ анҫах пулаť; çав 60 милліонтан улпутсен аллинҫе 26 милліон, хреçҫенсен аллинҫе 34 милліон десятина.

Нимĕҫсем туртса илнĕ çĕр çинҫе вăрçă пуçланиҫҫен 30 милліон çын пулнă (пĕтĕм патшалăхри мĕн пур çынсен улттăмĕш пайĕ); çав çынсенҫен нумайĕшĕ хăйсен çĕр-шывне пăрахса кунталла, пирĕн пата, тарса килҫĕç, халĕ пирĕн хушшăмăрта пурăнаççĕ (бѣженцы).

Соціалистсем—хуçасен çĕрне пĕр тӳлемесĕрех, пĕтĕм хысна çĕрне укçасăрах валеççе парăпăр, тесе халăха илĕртеççĕ. Парас тенĕ ҫухне илес тийекенсем тата нумайтарах, анҫах илес тийекен çынсем вăл ĕçе мĕнле тумаллине, малашне мĕн пулассине пĕрре те шухăшламаççĕ, пĕлмеççĕ те; па-

рас тийекеннисем хăйсен шухăшне халăха пĕтĕмпех кăларса памаççĕ.

Соціалистсем вĕсем çĕре те, ытти йапаласене те, никамăн та мар тăвасшăн, хреçђенсен те хăйсен нимĕн те ан пултăр, пĕтĕм мул, пĕтĕм йапала никамăн та мар, халăхăн пултăр, теççĕ.

Çав шухăш хура халăх çыннисен кăмăлне килмест, вĕсенђен нумайĕшĕ çĕре йат тăрăх тăрласа илесшĕн те, тата ĕç хакне тӳррипе илесшĕн; хăйсем тăрăшса ĕçлесе пухнă мула вĕсем никама та парасшăн мар, хăйсемех тытса тăрасшăн. Пурлă пуласси, ђипер пурăнăç курса пурăнасси тăрăшнинђен, тирпейлĕ пурăннинђен килет вăл, ăна хура халăх çыннисем хăйсем те пит лайăх пĕлеççĕ. Çынсене пурне те мĕн кирлине йаланах пĕр пек памалла пулсан, апла кам тăрăшса ĕçлĕ, кам тирпейлĕ пурăнĕ? Çынсем пĕр мулпа, пуйанлăхпа анђах уйрăм мар, тата ĕçленĕ ĕçре те çынсем пĕр пек мар.

Тургайская область тийекен çĕрте çĕр пĕтĕмпе ирĕккĕн сарăлса выртать, унта çĕре никам та виçмен, никам та хăйне йышăнман: ăçта пурăнас килнĕ, çынсем çавăнта пурăнаççĕ. Йалсем пит сахал, 25—30 çухрăм кайсан тин курăнкалаççĕ; çӳренĕ ђухне çавăнта йалан акă мĕн астăватăн: икĕ кил йунашар лараççĕ; пĕр килĕнђе 30 лаша, анкартинђе 10—15 капан тырă; тепĕр килĕнђе пĕр нађар лаша анђах, тырă тавраш пӳлмере те, анкартинђе те—шăпăрпа шăл-

сан та нимĕн те çук. Завод-фабрик тавраш̆ĕнђе ĕçлекен çынсем хушшинђе те çавăн пекех. Епĕ пĕлетĕп: Петроградра Алексѣй Петрович йатлă пĕр ĕçлекен çын пур, хăй вăл Тамбов кĕпĕрни çынни. Çав Алексѣй Петрович ĕçлесе уйăхне 400 тенкĕ ытла тупат̆. Çав укçапа вăл хăйĕн пысăк çемйине те тăрантарса усрат̆, йалти хурăнташĕсене те пулăшат̆, тата ӳлĕм валли те укçа пухса хурат̆; хăй вăл йалти шкулра анђах вĕренсе тухнă; тепĕрисем гимназіяран вĕренсе тухнă пулсан та кун сиктерсе анђах апат çикелесе пурăнаççĕ. Пурăнăçа ăнтарайман найан çынсем калаççĕ: çĕре те, ытти мĕн пур мула та, никамăн та мар, пĕтĕм халăхăн тумалла, вара хăйне мĕн кирлине пур те пĕр пек илсе тăрĕç, тесе кăшкăраççĕ. Алексѣй Петрович ун пек çынсене хирĕç ак çапла калат̆: çав сăмаха есир мана ан калăр, найан çынсене калăр, епĕ хам ĕçленипе те пурăнатăп. Манăн халĕ пĕр йат çĕрĕ анђах, çĕре уйăрма тытăнсан, вара епĕ те çĕр ыйтасшăн; епĕ куллен 12--15 сехет ĕçлетĕп, мана çавăншăн çĕрсĕр хăвармалла-и? тет. Алексѣй Петрович вăл ăслă çын, мĕн пулассине, мĕнрен мĕн тухса кайассине ђас ђухласа илет; вăл пĕђђен кăна мар, ун пек ăслă çынсем халăх хушшинђе пайтах. Çавăн пек çынсем мимелле пĕçерсе панă хурантан çисе пурăнасшăн пулђмĕç, çынсен йапалине туртса илме шухăш тытмĕç. Хреçђен çыннисене, йĕркелĕ, ăслă çынсене—çын йапалине

туртса илсе уйăрни кирлĕ мар, йат тăрăх тăрласа панă çĕр кирлĕ, хăйĕн кил-йышĕпе ĕçлесе пурăнмалăх çĕр кирлĕ. Вăрăсем кӳрсе панă лаша, йе çынтан ирĕксĕр туртса илнĕ çĕр хура халăх çыннин пурăнăçне малалла йарас çук вăл, вăрланă йапала, туртса илнĕ йапала етемĕн пурăнăçне тĕп—тăват анђах вăл. Вăрланă йапалана киле кӳртекен çын йут çĕре туртса илекен çын хăй вилнĕ ђухне ађисене йепле калĕ: ађамсем, ђипер килĕштерсе пурăнăр, тӳрĕ çынсем пулăр, тесе? Ĕлĕк çынсенђен туртса илнĕ йапала ăна аса килĕ те, вăл вара калас тенĕ кирлĕ сăмахне те калаймĕ.

Телейлĕ пурăнăç вăл ђипер, йĕркелĕ пурăннинђен килет. Вăрă нихăçан та пуйни çук, мĕн ирĕксĕр туртса илни те ђасах пĕтĕ, йе ăна ыттисем, вăйлăраххисем, туртса илĕç.

Халăхăн пурăнăçне малалла йарас тесен, çынсене телейлĕ тăвас тесен, çул пĕрре анђах: çынсен пурин те тăрăшса ĕçлес пулаť, пурин те вĕренес пулаť, мĕн ĕçлесе тупнине тирпейлĕ тыткалас пулаť. Çапла тăрăшса, йĕркелĕ ĕçлесе пурăнсан, çын ватăлсан та, ăна хуйхăрмалла пулђмĕ, хăй пек ĕçђен пулнă ађисем ăна тăрантарса усрĕç, вилсен те ăна тирпейлесе пытарăç, çĕр айне кĕрсе выртсан та унăн йађĕ çухалђмĕ, иртсе çӳрекен çынсем ăна пытарнă вырăна курмассерен çапла калĕç: унăн ђунне Турă ырă вырăн патăр, çак çĕр çинђи пурăнăçа вăл ђипер пурăнса ирттерђĕ, тийĕç.

IX. Ҫёртен етем усӑ курни.

Ҫёртен усӑ курасси, тырӑ-пулӑ тӑвасси, пахҫа-ҫимӗҫ пуласси ҫас ҫасах вӑл ҫын йепле ӗҫлениҫсн, ҫын тӑрӑшса ӗҫлениҫен, пӗлсе ӗҫлениҫен килет. Хуҫасен ҫӗрне пӗр тӳлемесӗрех туртса илес тесе кӑшкӑракан ҫынсем ҫавӑн ҫинҫен пӗртте каласмаҫҫӗ. Германія патшалӑхӗнҫе тырӑ-пулӑ пиртинҫен икӗ хут лайӑхрах пулать, Англіяра нимӗҫсеннинҫен те авантарах пулать. Мӗнтен килет вӑл? Нумай йапаларан килет вӑл.

Етем ӗҫлекен ӗҫ ӑнӑҫлӑ пултӑр тесен, ӗҫлекен ҫынна никам та ан ҫартӑр, никам та та ан кансӗрлетӗр, никам та ан пусмӑрлатӑр. Ҫӑн малтан ҫавӑ кирлӗ. Мӗн иртсе ҫӳрекен пӗри сана хурлантарать пулсан, кам санран вӑйли сана пусмӑрласа, санӑн йапалусене, санӑн мулна туртса илме тытӑнсан, санӑн ӗҫлес тенӗ ӗҫӳ те пӗтӗмпех ҫарӑнать, вӑл йенне кайсан, пурӑнӑҫ тытса ҫипер пурӑнӑп тесе ан та шухӑшла вара.

Тата ҫӗр ӗҫлениҫен усӑ нумайтарах курасси ҫынсем ытти ӗҫе ӗҫлеме пӗлнинҫен те килет вӑл. Пӗр пӗр ҫӗрте, йе вырӑнта тимӗр ӗҫне пӗлекен ҫын пулмасан, унта тимӗр ака та туйанаймастӑн; йалта кӗнеке вулама пӗлекен пӗр ҫын та пулмасан, ҫав йалта кӗнеке никама та усӑ кӳреймест. Тырӑ-пулӑ тӑвасси, пахҫа ҫимӗҫ тӑвасси, пӗр икӗ сӑмахпа каласан, ҫынсем пӗлнинҫен, ҫынсем ӑсталаннинҫен килет вӑл.

Етем хайне мӗн кирлине пӗлни, ӗҫре ӑста пуласси ҫын ирӗкре пурӑннинчен килет вӑл, ҫын вӗренсе пурӑннӑ чухне, ҫын ӗҫленӗ чухне, ӑна никам та ан кансӗрлетӗр, никам та ан пусмӑрлатӑр, вӑл ӗҫе ыттисем тума тытӑнман-ха, есӗ те ан ту, тесе ан калаччӑр.

Халӗ пирӗн ҫынсене ирӗк пачӗс, анчах ҫав ирӗк халӗ хут ҫинче анчах, пурӑнӑҫра ҫук-ха вӑл; ҫынсем хушшинче халӗ те пулин йӗркесӗр ӗҫсем: пӗр-пӗрне пусмӑрлани, пӗр-пӗрне ирӗксӗрлени пит нумай. Ҫынна хисеплени, ҫын тӑрӑшса ӗҫленине вырӑна хуни кирлӗ, ҫавӑ ҫук пирӗн, ҫавна пирӗн ҫынсем час та вӗренсе ҫитеймӗҫ-ха. Ҫынна ҫын вырӑнне хисеплесен, ҫын тӑрӑшса ӗҫленине хисепе хурсан, ҫӗр ӗҫлекен ҫын тата тӑрӑшарах ӗҫлӗччӗ, вара халчхи пек пушӑ выртакан вырӑнсем пулчмӗччӗҫ, ҫӗре авантарах ӗҫлесе, ҫӗртен нумайтарах усӑ курас тесе тӑрӑшӗччӗҫ. Халӗ ҫавна шухӑшлама та ҫук: ҫынсен йапалине туртса илмелле тенӗ сӑмах ҫав шухӑша татсах пӑрахатӑ.

Халӗ каланине ҫакӑнтан ӑнласа илӗр есир. Пирӗн йалсенче улма йывӑҫҫисем лартса ӳстерсе усӑ курма май пур. Ҫынсем хӑш йалсенче улма йывӑҫҫисем лартса ӳстерме тытӑнкалаҫҫӗ, анчах вӗсен ӗҫӗ пурин те ӑнӑҫлӑ пулмастӑ; йывӑҫҫисем ҫинче улма пулма пуҫласанах, ачча-пӑчасем кӗрсе улмисене татса пӗтереҫҫӗ, йывӑҫӗсене ҫӗмӗрсе тӑкаҫҫӗ. Ҫамрӑк аччасем кӗпе арки ҫинче

вăрласа килнĕ, сыснасене пама анҏах йурăхлă, симĕс улмасене илме килнине курсан та, ваттисем вĕсене йатламаҫҫĕ, ҏармаҫҫĕ, ҫавăнпа аҏа-пăҏасем алхасаҫҫĕ те. Пахҏа хуҫи кĕркунне пулсан, пахҏине сыхланă хакне сапламалăх та улма илеймест; ҫавăнпа нумайĕшĕ сыхламаҫҫĕ те, аҏа-пăҏасем вăрлама кĕрсе йывăҫсене ан ҫĕмĕрҏҏĕр, картаҫатана тустарса ан пĕтерҏҏĕр тесе, улми пиҫсе ҫитиҏҏенех, ҫу варринҏех улмисене симĕслех татса илсе сыснасене ҫитерсе пĕтереҫҫĕ. Ҫул тăрăх йывăҫсем лартса тухнă пулсан, тырă пулман ҫĕрсем ҫине йывăҫсем лартса ӳстернĕ пулсан, иртсе ҫӳрекен ҫынсем пирĕн, кам ӳркенмен ҫавă, ытти ҫынсен умĕнҏех, пĕр вăтанмасăр, пĕр именмесĕр ҫав ҫул ҫинҏи йывăҫсене ҫĕмĕреҫҫĕ, тураҏĕсене хуҫа хуҫа илеҫҫĕ. Ҫав ҫын йапали патне алла тăсни, ҫын тăрăшса ĕҫленĕ ĕҫе нимĕн вырăнне хуманни ытти ҫĕрте те пур вăл; тăрăшса ĕҫлеме ҫынсене ҫавă кансĕрлет те. Ҫав усала хирĕҫ аҏасене ҫамрăклах ырра вĕрентсе ӳстерес пулаť, пысăккисен те ытти ҫынсен йапалине хисеплеме вĕренес пулаť. Ирĕке тухнă халăх ҫав ырă йалана пĕр 10-15 ҫул хушшинҏе те вĕренсе ҫитĕ, вара пирĕн ҫынсем те, Австріяпа Германіяри пек, лутра карта урлă пиҫнĕ ҏийесем, улмасем ҫакăнса тăракан пахҏа патĕнҏен иртсе ҫӳренĕ ҏухне, пуҫĕсемпе перĕнсе ҫырлисене, улмисене ӳкерес мар тесе, пĕшкĕнсе иртсе кайĕҫ.

Çынсен мулне пĕр тӳлемесĕр туртса илмелле пулсан, çав ĕçе закон тăрăх туса, пĕтĕм патшалăхшăн анђах туртса илме пулаť. Патшалăха кирлĕ пулсан, закон тăрăх çыннăн пурăнăçне те илеççĕ. Пĕр çыннăн мулне тепĕр çын валли туртса илни халĕ ниăçта та çук вăл, ун пекки кайăкла пурăнакан çынсем хушшинђе анђах пулĕ. Ирĕклĕ патшалăхра, ирĕклĕ çĕрте çыннăн мулне закон тăрăх сут туса илме анђах пултараççĕ; законсăр, сутсăр пуçне никам та çын патне, çын йапали патне пырса перĕнеймест. Пирĕн халĕ калаççĕ: пĕр укçасăр туртса илес, илнине патнерех тăракан çынсене уйăрса парас, тесе кăшкăраççĕ. Çав сăмаха итлесе ђăнах та вырăнĕ—вырăнĕпе çĕрсене туртса илеççĕ, çарансене ăмăртса çулаççĕ, пуçтарнă утăсене, вырнă кĕлтесене пусмăрласа турттарса кайаççĕ. Çапла хăтланса çынсем халăх пуçтарас мул валли шăтăк алтса хураççĕ, çын тăрăшса ĕçленине пĕтĕмпе хисепрен кăларса, харама йараççĕ.

—Çынна хăйне те çын вырăнне хумаççĕ, выљђăх вырăнне анђах шутлаççĕ; вăл йенне кайсан, çыннăн ĕçлесси те килмĕ, тăрăшасси те килмĕ. Çын хăй тăрăшмасан, хăй ĕçлемесен, хăйне мĕн кирлине ăçтан тупĕ вăл. Апла çыннăнне мĕн пуррине укçасăрах туртса илĕр" тенĕ сăмах хыççăн кайсан, çынсем пĕр-пĕрне пĕтерме анђах тытĕнĕç, йышлисем сахаллăннисене пĕтерĕç, вăйлисем вăйсăррисене пусмăрлĕç; вара калаçма

та ирĕк пуљмĕ, шухăшлама та ирĕк памĕç, çынна хăйне те нимĕн ирĕк те пуљмĕ.

Нимĕђсен нумай вĕреннĕ ăслă çынни Кант ак çапла каланă: çынсене икĕ йапапала ĕмĕрех тĕлĕнтерсе тăрат: пирĕн пуç тăрринђи çăлтăрлă пĕлĕт, тата пирĕн ђĕрери—çынна хисеплес тенĕ шухăш. Çав шухăш пуррипе епир выљăхсенђен уйрăм тăратпăр та. Çав ђĕрери—çынна хиеплес тенĕ шухăш пире çапла калаттарат те: çын хăйшĕн анђах тăрăшмалла мар, ыттисемшĕн те тăрăшмалла-тетпĕр, пĕр халђхи çынсемшĕн анђах тăрăшмалла мар, ӳлĕм пурăнас тийекен çынсемшĕн те тăрăшмалла, тетпĕр.

Араб çыннисен акă çапла сăмах пур: кам йывăç лартат, (вĕсем лартакан финиковая пальма çимĕçĕ çĕр çултан тин пулат), çынна ырă ĕç тăват: йывăç çимĕçне хăй çийеймест, теççĕ. Есĕ лартса ӳстернĕ йывăç пахђине ытти çынсем туртса илмелле пулсан, санăн вара тăрăшса пахђа ӳстерес килĕ—и? Йапалана пĕр укçасăрах туртса илес йенне кайсан, вара паллах: санăн пахђăна туртса илнĕ çын—ку пахђана манран ӳлĕм ыттисем пурĕ-пĕр туртса илĕç, халĕ усă курса йулас тесе, йывăçсене касса тăкса вутă тăвĕ.

Çавăнпа епĕ калатăп: çĕре ђăнах та пĕр тӳлемесĕрех туртса илсен, пирĕн вара тырăпулă тăвас ĕç, пахђа çимĕçĕ тăвас ĕç малалла кайаймĕ, ђакса пырĕ; çĕр ĕçĕ ђакнипе ытти ĕçсем те ђакĕç, халăх та пĕтĕмпе çука йулĕ вара.

Халђхи пăтраннă саманара йалсенђе куштан çынсем çĕрлĕ çынсенђен çĕрĕсене турта турта илеççĕ, тата волостной комитет хушнипе пĕтĕм йалпа туртса илеççĕ. Мĕншĕн апла йĕркесĕр хăтланатăр, тесе ўкĕтлесен, „епир хамăршăн мар, çук çынсемшĕн тăрăшатпăр, туртса илнĕ çĕре хамăра мар, сахал çĕрлĕ çынсене валеçсе паратпăр“, теççĕ. Çав сăмаха хăйсем сўйеçтерсе анђах калаççĕ. Вĕсем çуккисемшĕн мар, хăйсемшĕн анђах тăрăшаççĕ, туртса илнĕ çĕрсене сахал çĕрлĕ çынсене памаççĕ,—вĕсем ĕлĕкхи йат-çĕрне те хăйсем акаймаççĕ, çынна параççĕ тесе, çĕре хăйсенех туртса илеççĕ. Хăйсен çĕрне хăйсен йапалисене никама та парасшăн мар вĕсем, хăйсем кăна çыннăнне туртса илесшĕн. „Туртса ил“ тенĕ социалистсен сăмахне вĕсем хăлхана ђикнĕ, „мĕн туртса илнине вăхăтлăха усă курма пур çынсене те пĕр пек уйăрса пар“, тенĕ сăмаха вĕсем йышăнман—ха. Çав сăмах пурин хăлхине те кĕрсен, ытти çынсем тата—туртса илекен çынсенђен çĕре илесшĕн пулĕç, туртса илеккеннисем мĕн илнине парасшăн пулђмĕç ,вара самана пушшех пăтранса кайĕ, çынсен пурăнăçĕнђе нимĕп йĕрки те пулђмĕ.

X. Çĕре пĕр тӳлемесĕр валеçсе пани.

Çĕре пĕр тӳлемесĕр туртса илсе çынсене валеçсе парсан, патшалăхра вара ĕç йĕркисем пĕтĕмпех пăтранса кайĕç.

I. Çĕр ĕçлекен çынсене çĕре темĕн тĕрлĕ тикĕслесе парас тесен те, нийепле те пурне те пĕр пек тикĕс пама май çук: хăш çĕр наҫар, хăшĕ аван; хăш çĕр нӳрлĕ, хăшĕ ҫас типсе кайаť. Тырă пулнипе те çĕре танлаштарма çук. Кирек кам та пĕлет: тырă пуласси вăл пĕр çĕртен анҫах килмест, ыттинҫен те килет: вăрлăхран, тăрăшса ĕçлениҫен, вăхăтра акса, вăхăтра вырниҫен те килет. Лайăх çĕр тытса тăракансене çĕршĕн куланай ытларах тӳлеттерсе, наҫар çĕрлисемпе танлаштарма йураť, тесе калаççĕ хăшĕсем. Çав сăмаха йалта пурăнса курман çынсем анҫах калама пултараççĕ. Наҫар тенĕ çĕрех тепĕри—ĕçҫен, хастарлă çын илет те, икĕ çул пĕр усăсăр ĕçлет, виççĕмĕш çулĕнҫе çав çĕр çинҫех, тăрăшса ĕçленипе, темĕн ҫухлĕ тырă тăваť. Ĕçлеме пĕлмен наҫар çын аллинҫе лайăх çĕр те пыра—киле наҫарланса кайаť, тырă пулми пулаť.

Çирĕм çул ĕлĕк епĕ çĕр ĕçне тытăнсан, манăн кӳрĕшсем мана калаҫҫĕç: санăн ĕç пит ăнаť мĕн, санăн ыраш та аван пулаť, çур-тырри те лайăх пулаť, тетҫĕç. Епĕ вĕсене хирĕç калаттăм: есир çур—тырри акма

хăçан сухалатăр, мĕнпе сухалатăр?—çуркунне, сухапа. Епĕ хăçан?—Епĕ кĕркунне, тимĕр акапа. Есир миçе хут сухалатăр?—Пĕр хут. Епĕ?—Епĕ икĕ хут. Манăн çавăнпа ăнăçлă пулать те, тесе калаттăм çынсене. Мана кура манăн кўрĕшсем те пыра-киле ман пек тăва пуçларĕç, манăннĕ пек тунипе вĕсен тырă манăннинђен те авантарах пула пуçларĕ: вĕсем манран та авантарах ĕçлеђђĕç, ĕçне тата вăхăтне пĕлсе ĕçлеђђĕç.

Çĕр ĕçлекен çынсем пур те пĕлеççĕ: пурăнăç ăнасси—ĕçе пĕлсе ĕçленинђен, вăхăтра ĕçленинђен килет, тирпейлĕ пулнинђен килет; кил-йыш çыннисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçе тăрăшса ĕçленинђен килет, çавăнпа хăш килте çĕр нумай пулсан та, пурăнасса нађар пурăнаççĕ, çитни нимĕн те çук; тепĕр килте çĕр сахал пулсан та, çителĕклĕ пурăнаççĕ.

Хреçђенсене çĕр тĕлĕшĕнђен пайан пурне те пĕр пек тусан, пĕр çултанах çав пĕр пек пуласси пĕтет, вара татах уйăрса памалла пулать. Хуçасенђен çĕре укçасăр туртса илсе çынсене пĕрре валеçсе парсан, вара çĕр ĕçлесе тăракан çынсен пурăнăçĕ малалла кайас çук, ђакса анђах пырĕ Çĕр ĕçлекен çынсем халĕ мĕн майпа çапла пурăнăç тытса тăраççĕ? Ĕçђен, ăслă çынсем кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек—хамăр ĕçе йепле авантарах тăвасши тесе шухăшласа пурăннипе, вĕсем тăрăшнипе çĕр ĕçĕ ăнăçлă пулса пырать. Çавăн пек тăрăшакан, кунĕн-çĕрĕн çав ĕç çинђен

шухăшлакан пулмасан, çĕр ĕçĕ ăнаçлă пулаймĕ, çынсем те çука йерсе кайĕç, вĕсен пуçĕнђи ăсĕ те кĕскелсе кайĕ.

II. Çĕр тытса тăракан çынсем хушшинђе пĕр çĕрсĕр çынсем те пур; çав çĕрсĕр çынсем хуласенђе анђах мар, йалсенђе те пур. Йут патшалăхсенђе хула çыннисем пирĕннинђен нумайтарах: Англіяра çĕр çынтан 78 çын хулара пурăнаť, Германіяра 56, Франціяпа Америкара 41 çын, пирĕн çĕр çынтан хулара пурăнаканни 15 çын анђах, пĕр Петроград кĕпĕрнипе Мускав кĕпĕрнинђе анђах хула çынни нумай: Петроград кĕпĕрнинђе çĕр çын пуçне хулара пурăнакан çын 75, Мускав кĕпĕрнинђе 53. Хуласенђе çынсем çуллен тенĕ пек йышлăланса пыраççĕ, йалти çынсем ĕçлеме тесе хуласене вăхăтлăха кайаççĕ те, пыра-киле пурăнма хуланах йулаççĕ, çавăнпа хула çыннисем йышлăланса кайаççĕ те.

Хреçђенсене çĕр валеçсе панă ђухне нумайĕшĕ тăранса пурăнма çителĕклĕ таранђђен пама шухăшлаççĕ. Çынсем пур те пĕр пек тăрăшса ĕçлеме пĕлсен, тата çынсем малашне пĕртте ĕрђемесен, çав шухăша тума май та килĕђђĕ; халĕ çынсем пур те пĕр пек тăрăшма пĕлменнипе, çынсем йалан ĕрђесе пынипе, çав шухăшпа тума питех май килмест. Çынсене çĕр пĕр пек уйăрса парсан та, çынсем пур вырăнта та çĕр ĕçленипе кăна тăранса пурăнаймĕç, çавăнпа çĕр ĕçĕнђен пуçне çынсен хăйсене тăрантарма урăх ĕç шырамалла пулĕ.

Хулара пурӑнакан ҫынсем ҫӗр ӗҫлесе мар, ытти ӗҫе ӗҫлесе тӑранса пурӑнаҫҫӗ, йалти ҫынсем ҫӗр ӗҫӗпе пурӑнаҫҫӗ, ытти ӗҫе хутран —килтен анђах ӗҫлекелеҫҫӗ. Англіяпа Германіяра фабрик-завд таврашӗнђе ӗҫлекен ҫын ҫӗр ӗҫлекен ҫынсенђен нумайтарах, пирӗн патшалӑхра ҫӗр ӗҫлекен ҫын нумайтарах. Йут патшалӑхсенђе фабрик-завод таврашӗнђе ӗҫлекен ҫынсен пурӑнӑҫӗ ҫинђен, ӑна йепле аванлатасси ҫинђен нумай калаҫаҫҫӗ; пирӗн ҫӗр ӗҫӗ ытти ӗҫрен пахарах, ҫавӑнпа пирӗн вӑл ӗҫ ҫинђен калаҫса, ђӑн малтан ӑна тӗплӗрех, йӗркелӗрех тӑвас пулаť, унтан вара ытти ӗҫ ҫинтен калаҫас пулаť.

Ҫӗр ӗҫлекен ҫын та, ытти ӗҫе тӑвакан ҫын та ҫийесшӗн, пурӑнасшӑн, ҫавӑнпа вӗсемшӗн пуриншӗн те тӑрӑшас пулаť, пӗрне ырӑлӑх туса, тепӗрне хурлӑха хӑварма йурамасť. Анђах вӗсен пурӑнӑҫне аванлатас тесен, ҫӗр ӗҫлесе пурӑнакан ҫынсене хӑйсене ӑрасна йӗрке кирлӗ, завод-фабриксенђе ӗҫлесе пурӑнакан ҫынсенӗ хӑйсене ӑрасна йӗрке кирлӗ. Ҫӗр ӗҫлекен ҫын хӑйне тӑранма хӑй ӗҫленӗ ӗҫренех илет: тырӑ-пулӑ тӑваť те, ҫавӑнпа пӗр ҫулталӑк хушшинђе тӑранса пурӑнаť. Хулара ӗҫлесе пурӑнакан ҫын кирек йепле ӗҫ ӗҫлесен те, хӑй ӗҫленӗ ӗҫӗн уссине тӳрех илеймест, тавар илекен ҫын урлӑ тин илет: тапака пӗри те сутӑн илмесен, тапак тӑвакан фабрик хупӑнас пулаť вара, хӑмаđ-ҫипӗ сутӑнмасан, ҫав ҫиппе ӗҫлекен ҫынсем выҫӑ лармалла пулаť. Ху-

лари çын хăй ĕçленĕ тавара сутсан тин, хăйне тăранма апат-çимĕç илме пултарать.

Фабрик-заводсенче ĕçлесе пурăнакан çынсен пурăнăçне аванлатасси çăмăл ĕç мар вăл, йывăр ĕç, çĕр ĕçĕнчен те йывăр. Çĕр тăрласа парас ĕçе тума хăйне йĕрке кирлĕ, фабрик-заводсенче ĕçлекен çынсен пурăнăçне аванлатма хăйне ăрасна йĕрке кирлĕ. Çав ĕçсене никама кӳрентермесĕр, никама сийен тумасăр, пурне те аван пултăр тенĕ шухăшпа тăвас пулать.

III. Етем ĕçлемен, етем алă хуман çĕр тĕнчере те çук пулĕ. Епĕ хам ку таранччен суха тытман, хам çĕре ытти çынсене тытса ĕçлеттеретĕп, хам ытти кирлĕ ĕçе тăватăп, çăвĕ-хĕлĕпе çулленех, кунĕ—çĕрĕпе тенĕ пек, кĕнекесем çинче ларатăп, хам та кĕнекесем çыратăп; хам мĕн ĕçлесе тупнă укçана çынсене çĕр ĕçне ĕçленĕшĕн паратăп. Пĕр пĕр хреçчен çыннин ывăлĕ хулара ĕçлесе пурăнать, хуларан ашшĕ патне килне укçа йарса тăрать; çав укçапа ашшĕ суха сухалаттарать, тырă актарать, тырă выртарать, кулана та çав укçапах тӳлет. Хулара пурăнакан çав хреçчен ывăлĕ тăрăшни, йе епĕ тăрăшни, çав çĕр патне пĕртте хутшăнмасть-и ĕнтĕ?! Епĕ хам суха тытмастăп пулсан, хам çĕре хам тăрăшса ытти ĕçпе тупнă укçапа тытса ĕçлеттеретĕп пулсан, манăн тăрăшни çав çĕр патне пĕртте хутшăнмасть-и—мĕн ĕнтĕ, вăл çĕр тĕлĕшĕнчен епĕ пĕтĕмпех йут çын пулатăп-и ĕнтĕ? Çĕре тытса ĕçлеттере-

кен çынсен тăрăшни те çав çĕр патне пырать, çав çĕре ĕçленĕ ђухне вĕсем те хăйсен вăйне хураççĕ, çав çĕршĕн тăрăшаççĕ. Çавăнпа çĕре туртса илни çыннăн вăйне, çыннăн тăрăшнине туртса илни пулать.

Çĕре туртса илнĕ хыççăн халĕ тата вырăнĕ вырăнĕпе вылђăх-ђĕрĕлĕхсене, йапаласене, вырса илнĕ тырăсене туртса иле пуçларĕç. Çĕре ахалех туртса илме йурать пулсан, ытти йапалана та ахалех илме йурать пулĕ, тесе шухăшлаççĕ: пĕр йапалана туртса илсен, вара тепĕр йапала патне те алă пырать. Калаçнă ђухне—епир çĕре, ытти йапаласене никамăн та мар, халăхăн тăвасшăн, йапала никамăн та харпăр хăйĕн ан пултăр, теççĕ; ĕçне тума пикенсенех, кам вăйлă тенĕ, çавă туртса илет, халăх валли тенĕ çĕре, çарана, йе тырра хăй валли илет; пĕринђен курса тепĕри те çавнах тума пăхать. Халĕ самана пăтраннипе çынсем никама та итлемеççĕ, нимĕне те пăхмаççĕ, пĕр хăйсен вăйне кăна пăхаççĕ, мĕн тăвас килнĕ, çавна тăваççĕ. Çынсем хушшинђи тавлă ĕçе етемĕн вăйĕ çине шаннипе анђах туса пырсан, апла нимĕн йĕрки те пулђмĕ. Халĕ кам нумайăн, çавă вăйлă; нумайăннисем сахаллăннисене: епир сире пурĕ пĕр пĕтеретпĕр, тесе, тĕрлĕ майпа хур—тăваççĕ, пире нимĕн те тăваймĕç вĕсем, теççĕ. Çав нумайăннисем хушшинђе те вăйсăртараххисем пур. Сахаллăннисене пĕтерсне, нумайăннисем вара хăйсен ушкăнĕнђи вăйсăртараххисене хĕс-

терме тытĕнĕç. Есĕ халĕ вăйлă, пурне те хăратса анђах çӳретĕн, пурăна-кине санăн та вăй пĕтĕ, çурăму кукленсе кайĕ, ун ђухне вара сана, вăйсăрскере, вăйлисем хăна пусмăрлама тытĕнĕç. Ĕнтĕ ирĕклĕ пурăнăç çавă пулђĕ-и? Пĕр-пĕрне пусмăрлама ирĕк панă-и пире?

Халĕ тата йалта пурăнакан çынсем, хăйсен тыррипе хăйсем тăранса пурăннипе, хулари çынсене çиме тĕлĕшĕнђен хĕстере пуçларĕç. Çавна хулари çынсем пур те пĕлсе, сиссе çитсен, вĕсем йалти çынсене ытти майпа хĕстерме тытăнĕç. Англіяра хуласенђе ĕçлесе пурăнакан çынсем йут патшалăхран килекен тырăшăн тӳлекен куланайа хăйсем пĕтерттернĕ: халĕ Англіяна тырă сутма кирек ăçтан та, кирек кам та пыма пултарать, çавăнпа Англіяра тырă хаклă мар, йӳн. Тырă йӳнни хулара ĕçлесе пурăнакан çынсемшĕн лайăх, йалта çĕр ĕçлесе пурăнакан çынсене лайăх мар. Тырă хакĕ ытла йӳннипе Англіяра вырăнĕ вырăнĕпе тырă акса, тырă туса пурăнас вырăнне выљăх-ђĕрĕлĕх усраса, ĕрђесе пурăнаççĕ.

Пирĕн те халĕ тырă хакне хысна хăй хуђĕ. Хăш вырăнта çав хысна хунă хакпа тырра сутсан, çĕр ĕçлекен çын тырăшăн ĕçленĕ хакне нийепле те кăлараймасть, çавăнпа тырă тăвакан çынсем тырă хакне ӳстересшĕн; тырă сутăн илсе пурăнакан çынсем ӳстересшĕн мар. Хулара ĕçлесе пурăнакан çынсем, çав „туртса илес“ тенĕ сăмах хыççăн кайса, пур йапалана та, тырра

та пĕр тӳлемесĕрех уйăрăпăр, тесе каласан, мĕн пуле? Вăл йенне кайсан, хулара та, йалта та тӳрлетсе пĕтерейми инкексем пулĕç. Хуласенђе те ĕç ђакса пырĕ, ĕçлеме çуккипе ĕçсĕр ларакан выçă çынсем нумайланса пырĕç. Çар çыннисем вăрçăран пур те таврăнсан, хуласенђе ĕçсĕр ларакан çын тата нумай пулĕ, вĕсене тăрантаракан та никам пулђмĕ, вĕсене çиме те нимĕн те пулђмĕ. Çав инкексемшĕн кама айăпламалла? Кам çыннăн çĕрне туртса илме хушнă, кам çыннăн çĕрне ирĕксĕр туртса илнĕ, çав çын айăплă, унăн айĕпĕ нихăçан та асран каймĕ.

Ӗӗмпӗрти ҫӑваш ушкӑнӗ ҫаптарнӑ кӗнекесем:

1. Уставъ Симбирскаго чувашскаго общества . . . . 20 п.
2. Резолюціи и пожеланія Общечувашскаго съѣзда въ гор. Симбирскѣ . . . . 80 п.
3. Навстрѣчу народу . . . . 15 п.
4. Ҫӗнӗ йӗрке кӑларакан патшалӑх пухӑвӗ . . . . . 5 п.
5. Ҫӗнӗ йӗрке кӑларакан патшалӑх пухуне кайас ҫынсене кам суйлӗ . . . . 5 п.
6. Халӑх ӗҫне тунӑ ҫӗре пур те, пӗр пек, тӳрех, ҫынна пӗлтермесӗр суйламалли йӗрке . . . . 25 п.
7. Вулӑсри земство . . . . 25 п.
8. Ҫӑвашсемшӗн усӑлӑ ӗҫ . . . . 7 п.
9. Ҫӑвашсемшӗн усӑлӑ ӗҫ. Аҫу аннӳ йӑлине ан пӑрах . . . . 15 п.
10. Патшалӑхра пурӑнӑҫ ирӗклӗ пултӑр тени мӗн вӑл? 45 п.

Ӗӗмпӗрти ҫӑваш ушкӑнӗ урлӑ сутакан кӗнекесем:

1. Ҫӑваш йуррисене темиҫе сасӑпа йурламалли кӗнеке . . . . 1 т. 50 п.
2. Ҫынсем йепле пуйаҫҫӗ? . . . . 40 п.
3. Ҫӗрпе ирӗк . . . . 35 п.
4. Пирӗн пуҫ ҫинҫе тӑракан инкек . . . . 1 т.